Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 ДЕКАБĔР 10 ЕРНЕКУН 282 (4794)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Професçилĕ Сойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕ
ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Професçилĕ сойузсен мĕн пур членĕсене, мĕн пур рабочисене, работницăсене, служăшчисене, инженерсемпе техниксене, учителсене, ăслăлăхпа искусствă работникĕсене

Йулташсем!

1937 çулхи декабĕрĕн вунникĕмĕшĕнче Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем, Социалисăмлă Конституци тăрăх, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутатсем суйлаççĕ. Професçилĕ сойузсем, партире тăманнисен ытти организацийĕсемпе обществисем пекех, суйлава Пĕтĕм Сойузри Коммунниссен (большевиксен) Партийĕпе блок туса, сойуз туса тухаççĕ.

Суйлав округĕсенче Аслă Совета депутата суйламă регистрациленĕ кандидатсене, коммунниссене те, партире тăманнисене те пирĕн организацисем активлăн хутшăнса хапăл тунипе тăратнă. Епĕр большевиксен партине партире тăманнисем ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама блок тунипе саламлатпăр тата професçилĕ сойузсен мĕн пур членĕсене, мĕн пур рабочисемпе работницăсене, служăшчисене, инженерсемпе техниксене, учителсене, ăслăлăх, литературă тата искусствă работникĕсене пурте пĕр çын пек кар тăрса хăйсен сассисене большевиксен партийĕшĕн, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пама чĕнетпĕр.

Мĕншĕн пирĕн организацисем большевиксен партийĕн политикине пĕтĕмпех хапăл тăваççĕ тата мĕншĕн епĕр ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă чухне коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пĕр шухăшлă пулса сасăлама чĕнетпĕр?

Епĕр большевиксен партине, Ленин—Сталин партине хапăл тăватпăр, мĕншĕн тесен большевиксен партийĕ пирĕн тĕрĕслеккĕ руководителе организатор пулса тăрать, мĕншĕн тесен большевиксен партийĕ йертсе пынипе анчах пирĕн çĕршыври ĕççыннисем хăйсем ваçҫи телейлĕ çĕнĕ пурнăç кĕрешсе илчĕç, социалисăм çĕнтерӳне турĕç.

Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă революциччен пирĕн çĕршывра помещиксемпе капиталиссем пуçпулса тăнă. Пурнăçăн мĕн пур ырлăхĕсемпе пуйан çынсен пĕчĕк ушкăнĕ усă курса пурăннă. Кам ĕçлене, кам тăрăшнă, кам мĕн пур пуйанлăхпа хаклă йапаласем тунă, унăн нимĕн те пулман, вăл çук пурнăçпа выçса пурăннă. Мĕн пур политикăлă правасем пуйансемшĕн çеç пулнă. Ĕççыннисем правасăр пулнă.

Большевиксен партийĕ Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă революцин çĕнтерӳне организацилерĕ. Вăл рабочи класа капиталисăма штурм тума йертсе пырса хамăрăн таван çĕршыври ĕççыннисене експлоатаци пусмăрĕнчен йăлăнлăхах хăтарчĕ. Етемлĕх историнче пуçласа çĕршыв хуçисем рабочисемпе хресченсем хăйсем пулса тăчĕç.

Большевиксен партийĕ ăнăçлă ертсе пынипе пирĕн таван Российĕнчен тĕттĕм те вĕренмен çĕршывран, вăтам ĕмĕрлĕ тата ĕççыннисене етемле мар пусмăрта пурăннă çĕршывран—хăлхасен тăвалла тулашса пурăнакан çĕршыв, социалисăм çĕршывĕ, чухăнлăха ĕçсĕрлĕха пĕлмен çĕршыв туса хучĕ, вăл çĕршывра кашни çын çĕнĕ хавалăхсем, чечекленекен телейлĕ çĕнĕ пурнăç курĕ.

Социалисăмлă промышленнăçпа социалисăмлă йалхуçалăхĕ пирĕн обществăн хускалми никĕсĕ пулса тăрать. Текех çук ĕнтĕ капиталиссем. Çĕршывăн пĕтĕм пуйанлăхĕ халăх аллинче тăрать. Пирĕн çĕршывра ĕçлев намăслă, ĕç нулинчен чыслăх ĕçĕ, мухтав ĕçĕ, паттăрлăхпа паттăрлăх ĕçĕ пулса тăчĕ. Мĕн пур рабочисен социалисăмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçлеççĕ. Заводсенче фабрикăсенче мухтавлă стахановла йухăм ӳсе сарăлать, вăл йухăм малта пыракан техникăна алла çавăрса илес çĕрте тĕлĕнмеле ĕçсем кăтартать.

Çаксене пурне те епĕр большевиксен партийĕ йертсе пынипе турăмăр.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ професçилĕ сойузсем тата ĕççыннисен мĕн пур организацийĕсене обществисем большевиксен партин политикине ырласа хапăлаççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ професçилĕ сойузсене пĕтĕм общественлă организацисен, мĕн пур членĕсене, мĕн пур рабочисемпе служăшчисене большевиксен партийĕшĕн, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пĕр шухăшлă пулса сасăлама чĕнетпĕр.

Патша Российĕнче ĕççĕрисен хисепĕ йăлăнах каламă çук нумай пулнă. Ырлăх кӳрĕ лайăхрăх пулассипе пĕр ĕççынни те шанман. Капиталисăмлă предпрыйатисенчи ĕç условийĕсем чăннипех катăргăри пек пулнă. Ĕçкунĕ 10—12—14 сехете, йе тата 16 сехете тăсăлнă. Ĕçукçи ытла та сахал пулнă, Канма паман. Отпуксем çинчен асра та пулман. Социалă страховани пулман. Чирлесен йе вататăнсан рабочисене нимĕн хĕрхенӳсĕр урамалла кăларса ывăтнă. Ĕççыннисем патша Российĕнче çавăн пек ĕçлесе çавăн пек пурăннă. Капиталисăмлă çĕршывсенчи ĕççыннисем хальте те çавăн пек ĕçлесе, çавăн пек пурăнаççĕ. Пирĕн çĕршывра çав иртнĕ хăрушă пурнăçа йалан-хăвах ĕртерчĕ.

ССР Сойузĕнче ĕçлев права, канăç права, вĕренӳ права, ватăлсан, ĕçнейми пулсан пурăнмали пулăшу илмели права пурнăçа кĕнĕ. Капиталисăмлă çĕршывсенчи пролетарийатăн хăрушă никĕсĕ—ĕççĕрлĕх ССР Сойузĕнче пĕтĕмĕпех ĕмĕрлĕхе пĕтнĕ. Пирĕн ĕçкунĕ тĕнчере чи кĕске—7-8 сехет. Ĕç ерни те кĕскелнĕ. Пурăна лайăхрах пулса тăчĕ, йулташсем, пурăнма хаваслăрах пулса тăчĕ.

Халăхăн пурнăçĕ çулран çул лайăхланса пырать. Рабочисемпе служăшчисен ĕç укçи пĕрмаях ӳсет. Совет государствин рабочисемпе служăшчисен, инженерсен сывлăхне тимлĕн пăхса упрать. Çак султа государствă страхованийĕне социалă страховани тума, йăлапа пурнăç условийĕсене лайăхлатма, культур пушисем ваçҫи, санаториссем, курортсем, канăçу çуртсем ваçҫи, медицинă йĕнепе пулăшу пама вунă пин мĕлйун тенке йахăн расхут каларнă. Рабочисемпе служăшчисен ĕç укçи илсе тăрса çулленех канма ерни хĕльхи йе уйăхлăха отпуска калаççĕ.

Çаксене епĕр пурне те большевиксен партийĕ йертсе пынипе тума пултартăмăр.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ рабочисемпе служăшчисем, ĕççыннисем пурте Ленин—Сталин партийĕшĕн каррăн тăраççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ епĕр рабочисемпе служăшчисене пурне те пĕр кăмăллă пулса большевиксен партийĕшĕн, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлама чĕнетпĕр.

Патша Российĕнче ăслăлăх, литературă, искусствă ĕççыннисемшĕн патне пулмала пулман. Капиталисăмлă строй творчествăлă шухăшсене ирĕк паман, халăх талантсене лучăркана, хĕснĕ. Совет влаçĕне большевиксен партийĕ пирĕн çĕршывра пурне те хута вĕрентес ĕçе пурнăçа кĕртрĕç, вуншар мĕлйун çитĕнĕ çынсен хутпĕлменлĕхне пĕтерчĕ, пурнăçа хутпĕлекен çĕршыв туса хучĕç. ССР Сойузĕнче кашни граждан вĕренӳ прави панă. Учебнăй заведени алăксем ĕççыннисене ваçҫи йарăпех усă. Вуншар пин клубсем, кино-театрсем, т. ыт. культурă учрежденийĕсем тунă. Çĕршывра темĕн чухлĕ кĕнекесем, хаçатсем туха тăраççĕ, вĕсем ĕççыннисене коммунисла воспитани параççĕ. Халăх хушшинчен айăлтан вĕçсĕр талантлă çынсем ӳсе çитĕнеççĕ, вĕсене большевиксен партине совет правительстви йăшăн пăхса çитĕнтереççĕ.

Рабочи клас хăйĕн интеллигенцине пăхса çитĕнтерчĕ; çак интеллигенци халăх ĕçне, социалисăм ĕçне тăвать, ăна пысăк хисеп панă. Пирĕн инженерсем, академиксем, писательсем, художниксем, архитекторсем—пĕтĕм совет интеллигенцийĕ историре пуçласа ирĕклĕн тăвăмлă ĕçлеме, халăх интересĕшĕн ĕçлеме май илчĕ. Большевиксен партийĕ çĕршывра тĕттĕмлĕхпе пĕлменлĕхрен кăларчĕ, ăна етем культурин çуллĕшĕсене патне илсе пырать.

Патша Российĕнче хĕрарăм икĕ хутлă пусмăрта пулнă, вăл халĕ те капиталисăмла çĕршывсенче çавăн пек пусмăрта. ССР Сойузĕнче анчах вăл ирĕклĕ те пĕртанлă. Пирĕн хĕрарăмсем—работницăсем, колхозницăсем, служăшчисем, килхуçи хĕрарăмĕсем çĕршывăн обществăлă пурнăçа активлăн хутшăнаççĕ, государствăн пĕтĕм пуçлăх ĕçĕнче, пĕтĕм пирĕн çĕршывра государствă уйрăмах — ача амăш хĕрарăмĕсене йуратса йăшăн пăхать. Совет влаçĕ ачапа ача амăшне сыхламалли тĕнчипе пĕртен пĕр системă туса хучĕ.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн çĕршывра пĕтĕм ĕççыннисем большевиксен партин политикине активлăн тăраççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ профсойузсен тата ĕççыннисен ытти организацисемпе обществисен пур членĕсем те ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пĕр пулса сасăлĕç.

Йулташсем!

Патша Российĕнче ĕççыннисен организацисене пур майсемпе те хĕснĕ. Рабочи класа професçилĕ организацисене пĕрлешме те чарнă. Ĕççыннисем пĕрлешме тăнине хайăррăн пĕтерсе лартнă. Совет çĕршывĕнче сойузсем ирĕклĕ. Пирĕн çĕршывра професçилĕ сойузсем рабочи класăн чи массăлă организацийĕсем. Совет çĕршывĕнчи професçилĕ сойузсене 22 мĕлйун ытларах рабочисемпе служăшчисем пĕрлешсе тăраççĕ. Совет влаçĕ професçилĕ сойузсем аллине рабочи класăн пурнăçне лайăхлатас ĕçре вăйлă рычаг пулса тăракан государствă социалăй страховани ĕçне пачĕ. Темĕн чухлĕ канмали çуртсем, санаториссем, ача учрежденисем. Пирĕн профсойузсем çине ĕç сыхлавĕпе техникă хăрушсăрлăхне контролĕ туса тăрас ĕçе хунă.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ професçилĕ сойузсем тата ĕççыннисен ытти организацийĕсемпе обществисем те большевиксен партийĕпе совет влаçне ĕпĕр професçилĕ сойузсене мĕн пур членĕсене, пĕтĕм рабочисене, служăшчисене коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлама чĕнетпĕр.

Епĕр çĕнтерӳсен сулĕпе мĕн чухлĕ малала кайатпăр, тăшмансем пире çавăн чухлĕ ытларах кураймаççĕ. ССР Сойузне тата хăватне çĕмĕрме пĕр хут кăна мар хăтланнă капиталисăмлă тĕнче рабочисемпе хресченсен государствине хирĕç çĕнĕ усал ĕçсем тума шутлать. Йапон-нимĕç фашисăмĕн троцкисла-бухаринла ылханлă агенчĕсем тата буржуалă националиссем ССР Сойузĕн хăватне тата унăн оборонă пултарулăхне хавшатас тесе, рабочисемпе хресченсене тĕрлĕ майсемпе ирсĕрлесе сăтăр тăвас тесе, чи ирсĕр преступленисем тăваççĕ. Совет влаçĕ халăх тăшманĕсене пурне те ним хĕрхенмесĕр сĕмĕрсе тăкрĕ, вĕсене нимĕн йулми пĕтерсе хуре.

Большевикла парти тĕрĕс йертсе пынипе, вăл пирĕн каратели органсене вăрăмлĕ ĕçлеме, пирĕн карателнăй органсен хăватне ӳстерсе пыма пирĕн Хĕрлĕ Çарăн хăватне ӳстерсе пыма тата совет государствине тулти политикăна ăслăн тытса пыма май панипе, совет халăхĕн хал, тăшмансем, фашисăм бандисем пирĕн таван çĕршыв çине тапăнма хăтланас мĕн пулсан, вĕсен вайĕсене çĕмĕрсе такма пултаракан пур.

Професçилĕ сойузсен членĕсем пур те, рабочисемпе служăшчисем, пур те акă мĕншĕн ĕнтĕ пĕтĕмпе сталинла Тĕп Комитетăн тата Совет Правительствин политикине тăраççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ епĕр мĕн пур ĕççыннисене коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пĕр шухăшлăн сасăлама чĕнетпĕр.

Йулташсем, рабочисем, работницăсем, служăшчисем, инженерсем, наукăпа искусствă работникĕсем!

Совет çĕршывĕнчи рабочи класа мĕн пур ĕççыннисем ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавне хăйсен çитĕнĕвĕсене большевиксен паттăр партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе çитнĕ ăнлансах хаваслăнах пыраççĕ. Большевикла парти ĕççыннисене йышлă массисене уйăрăлми сыхăнса тăрать. Унăн ĕççыннисен интересĕсемпе пуçне урăх интересĕсем çук, пулман та. Унăн пирĕн йуратнă таван çĕршыва чечеклентерес ыраспа, унăн хăватне малала ӳстерекелтес ыраспа, Совет Сойузĕнчи мĕн пур халăхсен тăванлăхне туслăхне тĕреклетес ыраспа йĕнпе тытса пырақан политикăсăр пуçне урăх политикă çук, пулман та.

Професçилĕ Сойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕ сире—**ССР СОЙУЗĔН АСЛĂ СОВЕТ СУЙЛАВĔНЧЕ КОММУНИССЕМПЕ ПАРТИРЕ ТĂМАННИСЕН БЛОК КАНДИДАЧĔСЕМШĔН ПĔРШУХАШЛĂ ТА ПĔРКĂМАЛЛĂ ПУЛСА САСĂЛАМА ЧĔНЕТ.**

Аслă Совета пирĕн çĕршывăн таван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕ хĕрĕсене, партипе тăракансене тата партире тăманнисене социализм çĕнтерĕвĕшĕн тата халăх телейĕшĕн хăйсене хăйсен пĕтĕм вăйне шеллемесĕр ĕçлесе тата кĕрешсе илнĕ шанăçне тивĕçлĕ пулнă çынсене суйлар.

Професçилĕ Сойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕ сире пурне те—**1937 ÇУЛТИ ДЕКАБĔРĔН 12-МĔШĔНЧЕ СОЙУЗ СОВЕТНЕ ТАТА НАЦИОНАЛЬНĂÇСЕН СОВЕТНЕ СУЙЛАМА СУЙЛАВ УЧАСТКИСЕНЕ ПЫМА ЧĔНЕТ.**

Совет государствин аслă органĕсене депутатсем суйламалли правана усă курасси—кашни суйлавçăн чи таса тивĕçĕ.

ЙУЛТАШСЕМ!

1937 ÇУЛТИ ДЕКАБĔРĔН 12-МĔШ КУННЕ ĔÇЛЕВ ÇĔНТЕРӲВĔН КУНĔ ТУСА ХУРАР!

ПУРТЕ СУЙЛАВА!

СЫВА ПУЛТĂР ПИРĔН ТАВАН ÇĔРШЫВ — СОВЕТЛА СОЦИАЛИСĂМЛĂХ РЕСПУБЛИКĂСЕН СОЙУЗĔ!

СЫВА ПУЛТĂР СТАЛИНЛА КОНСТИТУЦИ!

СЫВА ПУЛТĂР РАБОЧИСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕН ХĔРЛĔ ÇАРĔ!

СЫВА ПУЛТĂР СОВЕТ ГОСУДАРСТВИН АСЛĂ ОРГАНĔНЕ СУЙЛАМАЛИ ÇИТЕС СУЙЛАВРИ КОММУНИССЕМПЕ ПАРТИРЕ ТĂМАННИСЕН СОЙУЗĔ!

СЫВА ПУЛТĂР ПĔТĔМ СОЙУЗРИ КОММУНИССЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИЙĔ— ЛЕНИН-СТАЛИН ПАРТИЙĔ!

Професçилĕ Сойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕ

Парти Тĕпкомĕ чĕнсе каланине пурнăçа кĕртме пулаççĕ

Декабĕрĕн 8-мĕшĕнче Шупашкар йал суйлав округĕнчен ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидат М. М. Сахйанова йулташ хăйне палăртнă Кихĕчкасси суйлав участокĕнчи суйлавçăсемпе тĕл пулса калаçрĕ. М. М. Сахйанова йулташ 450 çынлă пухура хăйĕн ĕçĕсемпе пурнăçĕсем çинчен каласа пачĕ. Суйлавçăсем Сахйановăна пысăк кăмăлла итлерĕç.

Çав пухурах суйлавçăсем Парти Тĕпкомĕ чĕнсе каланине сӳтсе-йавсă. Тухса калакансем пурте парти Тĕпкомĕ чĕнсе каланине, ырласа, ăна пурнăçа кĕртме пулаççĕ.



Доверенăй Грачева йулташ Шупашкарти 10-мĕш суйлав участкинчи хĕрарăм-суйлавçăсен суйлав умĕнхи канашлăвĕнче сăмах калать.

Цыганов фото-Укерчĕкĕ.

В. П. Чкалов йулташ çырувĕ

Орденлă Чăваш республикĕнчи пур ĕççыннисене

Национальнăçсен Советне депутата суйлама манăн кандидатурăна тăратса ман çине шанăç хунăшăн мĕн пур суйлавçăсене хĕрӳллĕн тав тăватăп. Канаш, Çĕрпӳ, Вăрнар районĕсенчи тата республикă çĕршывĕнчи—Шупашкар хулинчи ĕççыннисем мана ăшшăн кĕтсе илнĕшĕн епĕ пĕтĕм чĕререн савăнатăп. Шеллетĕп, манăн сывлăх мана республикăри пур районсене те ситсе курма май памасть. Сирĕн республикăна 1938 çулта килме май пулассине шанса, орденлă Чăваш республикинченех туха кайатăп.

В. ЧКАЛОВ.

1937 çулхи декабĕрĕн 9-мĕш.

„Епĕр ССР Сойузĕн пысăк çитĕнӳвĕсен чен тĕлĕнтĕмĕр"

Испани делегацин председателĕ Томас Наварропа калаçни

ЛЕНИНГРАД, декабĕрĕн 6-мĕш (ТАСС). Ленинградран таван çĕршывне туха кайас умĕн ССР Сойузĕнче хăналаннă Испани делегацин председателĕ Томас Наварро ТАСС сотрудникне калаçнă чухне çапла каланă:

„Испани делегацийĕ ССР Сойузĕнче пĕр уйăх пулнă хыççăн мĕнле тулли кăмăлла пулнине темиçе сăмахпах каласа пама йăвăр. Вăл хушăра епĕр нумай хуласенче пултăмăр. Пур çĕрте те пире тимлĕхпе çавăрса илчĕç. Испани халăхĕ фашисла пăлхавçăсене тата интервентсене çĕнтерессине шанни çинчен каларĕç.

Пире Испани ачисемшĕн тăрăшни тата тимлĕ пулни чĕрене кĕрсе вырнаçрĕ. Хамăр çĕршывра епĕр Совет Сойузĕн халăхĕсем И пачийĕ йуратнине пĕрмаях сисетпĕр, халĕ ССР Сойузĕнче совет çыннисен пирĕн çĕнтерӳсем çинчен пĕлтерессĕн хыпарсене ăшран савăнса тата хавасланса кĕтнине уйрăмăнах систерĕç.

Епĕр ССР Сойузĕнче социалисăм аслă çĕнтерӳне кусма курса нен ĕмĕр. Епĕр ССР Сойузĕн халăхĕсем Совет влаçĕ кӳнĕ культурă тĕлĕшĕнчен мĕнле çӳлĕ сыпăка çитнине ĕненетĕмĕр. Ку çĕнелӳ социалисăм çĕнтерӳвне çирĕплетнĕ Сталинла Конституци тунине пулнă. Епĕр ССР Сойузĕн пысăк çитĕнӳвĕсене тĕлĕнтĕмĕр".

Станоксем тăвас ĕçĕн историнче нихăçан пулман рекорд

Йатлă стахановец-фрезеровщик Гудов йулташ нормăна 4 582 процент тултарнă

Декабĕрĕн 7-мĕшĕнче Мускаври Серго Орджоникидзе йачĕпе тăракан станоксем тăвакан заводра çĕршывăн йатлă стахановецĕ Сойуз Советне депутата суйламали кандидат, завод фрезеровщикĕ Иван Иванович Гудов станоксем тăвас ĕçĕн историнче нихăçан курман рекорд туса, совет техники çитĕнĕвĕсен кĕнекин çĕнĕ страници çине çырса хучĕ. Гудов йулташ ĕçкунĕ хушшинче нормăна 4.582 процент тултарнă. Вăл 1.152 детаçтунă, 1.028 тенкĕ те 88 пус ĕçлесе илнĕ.

Кăнтăрла, Гудов йулташ ĕçлекен цехра, митинг пулса иртнĕ.

Митингра Мускав большевикĕсен руководителĕ Хрущов йулташ сăмах туха каланă. Вăл Гудов йулташа заводăн пĕтĕм коллективне сывлăх сунна тата станок тăвакан пур рабочисене те малала çитĕнӳсем тума сĕннĕ. Хрущов йулташ митинга пухăннисем тăвăллăн ала çупса йышăннă.

(ТАСС).

Çĕмĕрле суйлав округĕнче

Суйлав кунне—декабĕрĕн 12-шне хатĕрленесси пысăк хастарлăхпа пырать. Предприйатисенче, колхозсенче тата вăрман ĕçĕнче ĕçлекенсем хушшинче социалисăмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Комбинатра столярнăй цехра Бутин, Буровина, Кузин стахановецсем куллекех нормăсене йăланах 200—250 процент тултарса ĕçлеççĕ. „Большевик" заводра рабочисем планран ытлашшин 340 тоннă тонннăд туса кăларассишĕн кĕрешеççĕ.

Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче—пурте ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйлама!

КЛИМЕНТ ЙЕФРЕМОВИЧ ВОРОШИЛОВ йулташ

Минск хулинчи ӗҫҫыннисен суйлав умӗнхи 120 пин ҫынлӑ митингӗнче 1937 ҫулхи декабӗрӗн 7-мӗшӗнче каланӑ сӑмах

Пулташсем, сире — рабочисемпе работницӑсем, колхозниксемпе колхозницӑсем, хӗрлӗ боецсем, командирсемпе политработниксем, ӗҫ интеллигенцийӗн представителӗсем, сире — Минск суйлав округӗнчи партирисем тата партире тӑман большевиксем — есӗр мана, Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Аслӑ Советне хӑвӑртан кандидата тӑратса, пысӑк чыс тунӑшӑн красноармеецла большевикла пысӑк тав тӑватӑп.

Пулташсем, кунта ман йатпа каланӑ ырӑ сӑмахсене пурне те епӗ пирӗн аслӑ Ленин—Сталин партийӗ йачӗпе каланӑ, тесе шутлатӑп. Епӗ хамӑрӑн партин ывӑлӗ пулса тӑратӑп,—епӗ халӑхшӑн мӗнле те пулин тава тивӗҫлӗ ӗҫ тунӑ пулсан, епӗ ӑна хамӑрӑн партийе пула, хамӑрӑн ҫулпуҫӗ Сталин йулташа пула тунӑ. **(Алӑ ҫупаҫҫӗ, „урра" кӑшкӑраҫҫӗ).**

Тепӗр икӗ кунтан пӗтӗм совет халӑхӗ хӑйӗн ирӗкне палӑртма, Сталинла Конституци тӑрӑх ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйлама суйлав урнисем патне пырать.

Халӑхӑн пирӗн Сталинла Конституци пек конституци пурри, халӑх пирӗн совет халӑхӗ пӗртан правалӑ тата полномочилӗ пулса тӑнӑ пекех пӗртан правалӑ тата полномочилӗ пулса тӑракан ҫӗршыв тӗнчере урӑх ҫук.

Хӑйсене хӑйсем демократиллӗ текен буржуалӑ государствӑсем нумай. Ҫав демократисен хакне епӗр пурте лайӑх пӗлсе тӑратпӑр. Вӗсем—суйа демократи. Рабочисемпе хресченсем, мӗн пур ӗҫҫыннисем, вӑл шутрах интеллигенци те, капиталиссен пысӑк мар ушкӑнӗн интересӗшӗн ӗҫлепӗ ҫӗрте, хайар клас кӗрешӳвӗ вӗрсе тӑнӑ ҫӗрте, ӗҫсӗр йулнӑ мӗлйуншар пролетарисем мӗскӗн пурӑннӑ ҫӗрте, буржуази хӑйӗн саккунӗсемпе хӑйӗн ирӗкне пӑхӑнтарса тӑнӑ ҫӗрте,— унта чӑн-чӑн демократи ҫук, пулма та пултараймасть, унта граждансем пӗртанни ҫук, пулма та пултараймасть.

Пирӗн ҫӗршывра анчах, ӗҫ ҫӗнтерӗ ҫӗршывра, чӑн-чӑн демократи пур.

Пирӗн Сталинла Конституци социализм кӗрешсе илнисен чаплӑ итогӗ, Ленин—Сталин партийӗпе Совет Союзӗнчи пӗтӗм ӗҫҫыннисем тунӑ аслӑ ҫитӗнӳсен итогӗ пулса тӑрать. Совет Союзӗнче анчах Конституци пур ӗҫҫыннисене вальли те ӗҫлев прави, вӗренӳ прави, ватӑлсан, йурӑхсӑрланнӑ пулӑшу илмели права гарантилет.

Совет ҫӗршывӗнче анчах Конституци хӗрарӑмсен тулли пӗртанлӑхне гарантилет, телейлӗ ача амӑшӗ пулма май туса парать.

Совет ҫӗршывӗнче анчах пур нацилӗ пур расалӑ халӑхсем те пӗртан правалӑ, вӗсем Советлӑ Республикӑсен Союзӗнче тӑванла пӗр ҫемйере пурӑнаҫҫӗ.

Пулташсем! Совет влаҫӗн ҫирӗм ҫулӗ хушшинче пирӗн ҫӗршыв — чухӑн та мӗскӗн, культурӑсӑр, кайа йулнӑ пулнинчен — хӑватлӑ социализмлӑ державӑ пулса тӑчӗ. Епӗр социализмӑн пур облаҫӗсенче те тунӑ ҫӗнтерӳсемпе ҫитӗнӳсене халӗ ӗнтӗ пурте йышӑнаҫҫӗ, пирӗн клас тӑшманӗсем те, шӑлӗсене шатӑртаттарса та пулин, ирӗксӗрех ҫавна йышӑнмала килет.

Анчах ҫав ҫитӗнӳсем Ленин—Сталин партийӗ пит пысӑк вӑй-хӑват хурса ӗҫленипе, рабочи клас, колхозлӑ хресченсем тата пӗтӗм ӗҫҫыннисем пит пысӑк вӑй хурса ӗҫлени результачӗ пулса тӑраҫҫӗ. Вӑл аслӑ Сталин партийӗ, пӗтӗм халӑха ӑсларан та ӑслӑ йертсе пынин результачӗ пулса тӑрать. **(Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).**

Аса илӗр-ха, йулташсем, Ленин—Сталин партийӗ хамӑрӑн пӗтӗм совет историйӗ тӑршшинче мӗнле вырӑнта тӑрса ӗҫлесе пынине. Граждан вӑрҫи пулнӑ, йутҫӗршывсем вӑрҫӑпа тапӑннӑ ҫулсенче, хуҫалӑх йухӑннӑ, выҫлӑх пулнӑ ҫулсенче Ленин—Сталин партийӗ кӗрешӳн пӗрремӗш линийӗнче пулнӑ, вӑл массӑсене организациленӗ, революцин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене тунӑ, вӗсене кӗрешӳве йертсе пырса ҫӗнтерӳсем тунӑ.

Халӗ пирӗн хӑватлӑ Хӗрлӗ ҫар пур, анчах вӗт пирӗн Хӗрлӗ ҫар йапӑх хӗҫпӑшалланнӑ вӑхӑт та, ҫитменнине апачӗ те ҫителӗклӗ пулман вӑхӑт та пулнӑ.

Рабочисемпе хресченсен массисене пур йывӑрлӑхсене те ҫӗнтерсе татӑклӑ ҫӗнтерӳ тума шанчӑклӑн йертсе пыма пирӗн Ленин—Сталин партийӗ пек чи ырӑ парти кирлӗ пулнӑ.

Граждан вӑрҫи вут-хӗмӗнче пирӗн парти Хӗрлӗ ҫара турӗ ҫеҫ мар, пӗр вӑхӑтрах тата социализмла государствӑн строителӗсене те ҫитӗнтерсе пычӗ.

Рабочи класӑн партийӗ умӗнче унчухне пит пысӑк задача тӑнӑ—пуҫарнӑ ӗҫе вӗҫне ҫитиччен туса ҫитермеле—социализмла революцин пур тӑшманӗсене те аркатса тӑкмала пулнӑ, рабочи класа, ун урлӑ мӗн пур ӗҫҫыннисене организацилесе, классӑр социализмла государствӑ туса хумала пулнӑ.

Анчах ҫавна пурнӑҫа кӗртме парти хӑй пӗрлӗхлӗ те, пӗтӗҫӳлӗ пулнине тумала пулнӑ.

Пирӗн парти вӑл — чӗрӗ, пӗрмайах ӗҫлекен, хӑватлӑ организм, — ҫавна есӗр лайӑх пӗлсе тӑратӑр. Пирӗн партийе унӑн тӑшманӗсем шалтан хавшатма, ҫӗмӗрсе тӑкма, пӗтерсе хума пӗр хут ҫеҫ мар хӑтланса пӑхнӑ.—ҫавна та есӗр лайӑх пӗлсе тӑратӑр.

Ленинӑн тата Сталинӑн асларан та аслӑ тава тивӗҫлӗ ӗҫӗ ҫакӑ пулать: вӗсем, пролетари революцин чӑн-чӑн стратегӗсем, пирӗн парти пӗрлӗхлӗ, пӗтӗҫӳлӗ, кӗрешекен массӑсен умӗнче пыма пултаруллӑ пултӑр тесе ывӑнма пӗлмесӗр тӑрӑшрӗҫ. Парти Ленин тата Сталин йертсе пынипе хӑйӗн речӗсене найкӑшакансенчен, шанман ҫынсенчен революци ӗҫне шанми пулнӑ ҫынсенчен, изменниксемпе предателсенчен пӗр хут ҫеҫ мар тасатрӗ.

Совет Союзӗнчи Ленин—Сталин партийӗ йертсе пыракан рабочи класпа ӗҫҫыннисем аслӑ ҫӗнтерӳсем турӗҫ,—вӗсен хӑйсен социализмла государстви пур. Анчах пирӗн тӗллев—коммунизм. Пирӗн пурин те пӗтӗм вӑйа хурса пит пысӑк ӗҫ тумала-ха. Пирӗн ретсем, малти отрйадсен речӗсем ҫирӗп пулни, коммунизм ӗҫӗшӗн шанчӑклӑн тӑни кирлӗ. Борецсем хушшинче, пирӗн ырӑ парти ретӗнче изменниксемпе предателсене вальли вырӑн ҫук, пулмасть те. Епӗр, троцкисла тата йутҫӗршывсен разведкисем пирӗн пата йарса тӑракан, пирӗн ҫӗршыврах та тупакан предателсемпе шпионсене хирӗҫ ним хӗрхенӳсӗр кӗрешӳ пуҫарса йатӑмӑр, ҫак кӗрешӳве епӗр халӑхӑн тӑшманӗсене пурне те, социализмӑн тӑшманӗсене пурне те пӗтерсе ҫитериччен чармастпӑр.

Есӗр, Белоруҫҫи столицинчи ӗҫҫыннисем, предателсемпе шпионсем кунта сирӗн патӑрта, Белоруҫҫи ҫӗрӗ ҫинче ҫав тери нумай сиен тунине, ирсӗрлӗхсем нумай тунине пӗлетӗр. Ҫав господасем пурте хӑйсен ишӗлтерӳлӗ ӗҫӗсене мӗнле мелсемпе туса пынине есӗр пӗлетӗр. Анчах вӗсем Белоруҫҫири колхозниксемпе рабочисене пирӗн партипе правительствӑпа хирӗҫ тӑратайман, а ҫавна тӑвас тесе вӗсем ирсӗрлӗхӗн пур майӗсемпе те ҫине тӑрсах хӑтланнӑ. Вӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса тивӗҫлипе айапланӑ.

Ҫӗнӗ пурнӑҫшӑн кӗрешекен мӗлйуншар борецсем ҫӗнтерӳлӗн пыракан ҫула урлӑ тӑма шутлакансем лайӑххӑн пӗлсе тӑччӗр, лайӑххӑн асра тытчӗр—вӗсене, хурт-кӑпшанкӑсене пӗтернӗ пекех, таптаса тӗп тӑватпӑр.

Тӑшмана нимӗнле хӗрхенӳ те, нимӗнле каҫару та пулмасть.

Пулташсем! Хамӑрӑн историн ҫирӗм ҫулӗ хушшинче епӗр пит пысӑк ҫитӗнӳсем турӑмӑр. Пирӗн ырӑ ҫар, ырӑ социализмла хуҫалӑх, ырӑ фабрикӑсемпе заводсем, ырӑ большевикла колхозсем пур. Епӗр культурӑ тӗлӗшӗпе пит пысӑк ҫитӗнӳсем турӑмӑр, епӗр ӗнтӗ коммунизмӑн пирвайхи сыпӑкне—социализм турӑмӑр, анчах пирӗн тӗллев—коммунизм. Ҫав тӗллев патне ҫитме пирӗн ҫине тӑрса ӗҫлемелле-ха. **(„Урра" кӑшкӑраҫҫӗ, нумайччен алӑ ҫупаҫҫӗ).**

Пире пур йенчен те капитализмла государствӑсем хупӑрласа тӑраҫҫӗ. Капитализм пирӗн социализм строительствине тӑшманлӑ. Фашизм Совет Союзне йунама чарӑнмасть. Пирӗн сирӗнпе пӗрле, хамӑрӑн аслӑ тӑван ҫӗршыва унӑн социализмла кӗрешсе илнисене сыхлама пултаракан Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарне хатӗр тӑратас пулать. Пирӗн Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗ, пӗтӗм халӑх пекех, хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва сыхлама хатӗр тӑрать. **(Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).** Анчах хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва сыхлама хатӗр тӑнипе ҫитмест. Пирӗн социализм строительстви, пирӗн заводсемпе фабриксем, пирӗн совхозсемпе колхозсем ҫав тери ҫулӗ пулни кирлӗ—тӑшмана ӑнаҫлӑн сирсе пӑрахнипе пӗрлех, пирӗн пурнӑҫ та йӗркеллех пултӑр.

Клас тӑшманӗ пире канӑҫ памасть. Епӗр мирлӗ пурнӑҫӑн ырлӑхӗсемпе усӑ куратпӑр пулсан, вӑл пирӗн пит ырӑ хӗҫпӑшаллӑ вӑйсемпе лайӑх социализмла хуҫалӑх пуррипе пулчӗ. Пирӗн малалахи аталану хӑватлӑ та ҫирӗп пултӑр тесе, нумай йышлӑ тӑшмансем пирӗн тӑван ҫӗршыв ҫине тапӑнма хӑйиччен малтан нумайччен тата лайӑххӑн шухӑшласа пӑхчӗр тесе, тапӑнсан часах ӳкӗнчӗр тесе пӗтӗм вӑйа хурса ӗҫлӗпӗр.

Йулташсем! ССР Союзӗн Аслӑ Советӗн суйлавӗ—вӑл Совет Союзӗн—пӗтӗм ӗҫҫыннисен тӑван ҫӗршывӗн пӗрлӗхӗпе хӑватне чи лайӑххӑн кӑтартса паракан-ши.

Советлӑ Белоруҫҫи социализмӑн форпосчӗ пулса тӑрать. Вӑл икӗ тӗнче чиккинче—хӗвеланӑҫри ҫӗрсе пыракан капитализмпа улӑпла ӳсе пыракан социализм чиккинче тӑрать. Ҫапла ӗнтӗ, советлӑ Белоруҫҫири ӗҫҫыннисем умӗнче уйрӑм задача тӑрать—вӗсен йаланах совет алӑкӗсене хуралласа тӑмала, тӑшман пирӗн совет ҫуртне ан кӗтӗр тесе уйрӑмах ҫивӗч сыхласа тӑмала, тата кирлӗ вӑхӑтра пирӗн Хӗрлӗ ҫарпа пӗрле хамӑрӑн чикӗсем патӗнче тӑшмана тивӗҫлипе кӗтсе илме хатӗр пулмала.

Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче есӗр Аслӑ Совета манӑн кандидатурӑшӑн сасӑлатӑр, ҫапла ӗнтӗ есӗр пирӗн партишӗн, Ленин—Сталин партийӗшӗн, большевикла ӗҫшӗн, социализм ӗҫӗшӗн, пӗтӗм ӗҫҫыннисен ӗҫӗшӗн, хӑвӑрӑн тата хӑвӑрӑн ачусен ӗҫӗшӗн сасӑлатӑр.

Епӗ сирӗн тивӗҫлӗ представител пулма тата хӑвӑр ман ҫине хунӑ шанчӑка тӳрре кӑларма сӑмах паратӑп. **(Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).**

Сыв пултӑр пирӗн аслӑ та телейлӗ совет тӑван ҫӗршывӗ!

Сыв пултӑр пирӗн аслӑ совет халӑхӗ!

Сыв пулччӑр мухтавлӑ Белоруҫҫи ӗҫҫыннисем!

Сыв пултӑр пирӗн аслӑ Ленин—Сталин партийӗ!

Сыв пултӑр ӗҫҫыннисен аслӑ организаторӗ, совет государствине тӑвакан, коммунизм строителӗ—аслӑ Сталин! **(Нумай хут „урра" кӑшкӑраҫҫӗ, нумайччен алӑ ҫупаҫҫӗ. „Интернационал").**

Ҫамрӑк суйлавҫӑсен канашлӑвӗ

ҪӖМӖРЛЕ (хамӑр корр.). Декабӗрӗн 6-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫамрӑк суйлавҫӑсен суйлав умӗнхи канашлӑвӗнче 400 ҫын ытла пулчӗ. Канашлӑва партире тӑман ҫамрӑк суйлавҫӑ, комбинатри урапасем тӑвакан цехри Йеремейев йулташ уҫрӗ.

— Епӗ комбинатра 1933 ҫултанпа ӗҫлетӗп. Малтанах станок ҫинче ӗҫлерӗм, кайран мана маҫтӑра куҫарчӗҫ. Епӗ партипе правительства хушнӑ ӗҫсене тума йаланах хатӗр. Мӗншӗн тесен парти хушнӑ пек ӗҫлени хамаршӑн ӗҫлени пулать. Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче суйлав урни патне кайса хамӑн сасӑма В. П. Чкалов, И. В. Новиков тата А. М. Краснов йулташсемшӗн паратӑп. Сире, ҫамрӑк суйлавҫӑсене ҫавсемшӗн сасӑлама чӗнетӗп,— терӗ Йеремейев йулташ.

Унӑн сӑмахне залра ларакан ҫамрӑксем хыттӑн алӑ ҫупнипе саламларӗҫ.

Трибунӑ ҫине ҫамрӑк суйлавҫӑсем пӗрин хыҫҫӑн тепри тухаҫҫӗ. Пурте вӗсем Чкалов, Краснов, Новиков йулташсем Аслӑ Совет депутачӗ пулма тивӗҫли ҫинчен калаҫҫӗ.

Канашлу Сталин йулташ патне саламлӑ ҫыру йачӗ тата ССР Союзӗн Аслӑ Совет депутатне суйлама палӑртнӑ кандидатсене ырласа, декабӗрӗн 12 мӗшӗнче вӗсемшӗн сасӑлама пулса резолюци йышӑнчӗ.

Саша Кондратйев йулташ сӑмахӗ

(Комбинатри рабочи—комсомолец)

Пире ҫамрӑксене пысӑк правасем панӑ. Епӗр Сталинла Конституци тӑрӑх Аслӑ Совета суйлама, хамӑр суйланма та пултаратпӑр. Пирӗн ӗҫлев, вӗренӳ, кану прависем пур.

Кам пачӗ ҫак ырлӑха? Ӑна коммунистсен партийӗ йертсе пынипе турӑмар. Пирӗн пурнӑҫ—чечек. Епӗр ирӗклӗ, пуйан та культурлӑ ҫӗршывра савӑнса пурӑнатпӑр. Ҫав савӑнӑҫшӑн пӗтӗм вӑйа пама хатӗр епӗ.

Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче епӗр Национальнӑҫсен Советне депутата суйлама Совет Союз Геройӗшӗн В. П. Чкаловшӑн сасӑсене паратпӑр. Ҫакӑн пекех епӗр Ҫӗмӗрле суйлав округӗ тӑрӑх Национальнӑҫсен Советне депутата суйлама палӑртнӑ И. В. Новиковшӑн тата Союз Советне депутата суйлама палӑртнӑ А. М. Красновшӑн сасӑсем паратпӑр. Вӗсем ҫирӗп большевиксем, коммунистсен парти ӗҫне чӗререн парӑнса ӗҫлеҫҫӗ.

Сыв пултӑр пире телейлӗ пурнӑҫ туса паракан, йуратнӑ Сталин, **(Алӑ ҫупаҫҫӗ).**

Иван Меркулов йулташ сӑмахӗ

(„Труженник" заводри рабочи)

Йулташсем, ҫӗршыв сывхарса килекен чаплӑ куна—декабӗрӗн 12-мӗшне ӗҫре ҫитӗнӳсем туса кӗтсе илме хатӗрленет. Пирӗн завод ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйламали куна ҫулталӑк планне тултарнипе кӗтсе илет.

Йулташсем, пире ҫамрӑксене большевиксен партийӗ йаланах вӗрентсе пырать. Епӗр хамӑрӑн коммунистсен партине чӗререн йуратпӑр. Ҫавӑнпа епӗр Аслӑ Совета коммунистсен партине парӑнса ӗҫлекенсене суйлатпӑр.

Пирӗн заводри 350 суйлавҫӑсем пӗр сасӑпах Аслӑ Совета Чкалов, Краснов, Новиков йулташсене суйлама йышӑнчӗҫ. Епӗ те сире, ҫамрӑк суйлавҫӑсене ҫав кандидатсемшӗн сасӑлама чӗнетӗп.

Кунран кун пурнӑҫ лайӑхланса пырать. Мӗншӗн савӑнас мар-ха халӗ пирӗн? Ҫав пурнӑҫа туса паракан аслӑ Сталина хӗрӳлӗ салам!

— О —

Ӗҫ кӗнеки

Колхозник ӗҫ кӗнекийӗ колхозникшӑн пит те кирлӗ, пит те пысӑк пӗлтерӗшлӗ документсенчен пӗри пулса тӑрать. Кам пӗлмест— ҫак документ ҫинче колхозникӑн кашни тата пӗтӗм ӗҫӗ, мӗн чухлӗ ӗҫлени, ӗҫ кунӗсен шучӗ палӑрса тӑрать, ҫак кӗнеке ҫинчи ӗҫкунӗсем тӑрӑх ӗнтӗ колхозник тупӑшсене илет. Ҫавӑнпа та колхозник ҫак кӗнекене лайӑх тытса усрама тӑрӑшать. Ҫак документӑн пӗлтерӗшӗ хальхи вӑхӑтра татах та ӳсет: ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйланӑ кун, декабӗрӗн 12-мӗшӗнче колхозниксем суйлав участки ҫуртӗнче ҫак чаплӑ кӗнеке тӑрӑх суйлав бюллетенӗ илеҫҫӗ.

Анчах хӑшпӗр колхозсенче ҫак документ ҫине ҫителӗклӗ таран пӑхмаҫҫӗ. Лапӑртаса пӗтернӗ ӗҫ кӗнекине кашни колхозрах тупма пулать тесен те йанӑш пулас ҫук. Хӑшпӗр колхозри бригадирсем ӗҫ кӗнеки ҫинче чӗркелесе ҫырса хураҫҫӗ те, ӗҫ кӗнекин пӗтӗм сӑнне йараҫҫӗ.

Тренкӑ йалӗнчи (Тутаркас р) „Краснофлотец" колхоз членӗ Сухарин Илйа Иванович хӑйӗн тата арӑмӗпе хӗрӗн ӗҫ кӗнекине кӑтартрӗ.

— Пӑхса тухӑр-ха ҫак кӗнекене, кайран вара есӗр мана мӗн тумаллине каласа парӑр. Епӗ хам та вулама пӗлекен ҫын, анчах ӗҫкӗнеки ҫине ҫырнисене вулаймастӑп та, ӑнланаймастӑп та,—терӗ вӑл.

Чӑнах та ҫак висӗ „ӗҫ кӗнеки" ҫине бригадир ҫырнисене вуласа тухса ӑнлама тем пек хӗн. Унта лапӑртаннӑ вырӑнсем, ҫырас вырӑнне кавычкӑсемпе черточкӑсем лартса тултарнисем темӗн чухлӗ. Сухарин кӗнекинче, „мӗн ӗҫленине кӑтартни" графара, апрелӗн 22-мӗшпе 28-мӗш числисенче „Ҫырма тури..." тесе ҫырнӑ. Мӗн вӑл ҫырма тури? Мӗнле ӗҫ? „Мӗн чухлӗ ӗҫлени" ҫинчен ыйтакан графана нимӗн те лартман, ӗҫ кунӗ—0,20. „Возка снопов" тенӗ ӗҫ тӗленче цифрсене ҫыра-ҫыра хуратнӑ 6 шстраницӑра числасене хуратса хунӑ.

Сухарина Йелизавета кӗнекинче 7—8—11кун ӗҫленишӗн мӗн пурӗ те пӗре кӑна алӑ пуснӑ. 5-мӗш пе 7 мӗш страницӑсенче мӗн ӗҫленине икӗ куншӑн ҫеҫ кӑтартнӑ, ытти кунсемшӗн кавычкӑсемпе черточкӑсем ҫырса хунӑ. Кун пеккисем тата та пур—пӗтӗмпе 14.

Сухарина Аннан кӗнекинче 3 кун ӗҫленӗшӗн бригадир алӑ пусман.

Калас пулать, бригадир Морозов, пӗтӗм ӗҫ кунӗсене хыпаланса, йӗрӗнсе ҫырса панӑ. Хӑшпӗр ӗҫсем ҫинчен кӑна вуласа тумпа пулать.

— Темӗскер ҫырнӑ никам та вулаймасть. Ҫавӑн пиркийех манӑн кӑҫалхи ӗҫсен шутӗнчен 51 лав кӗлте турттарни ҫухалчӗ,—тет Сухарин. Висӗ кӗнеки ҫинче те пичет пусни ҫук.

Тренкри колхозра (председател Кузмин, счетовод Волков) ҫитленменлӗхсем ытла та нумай. Районри работниксем колхозниксем кӑтартса панӑ ҫитменлӗхсене пӗтерес тесе нимӗн те туман.

Ҫак висӗ ӗҫкӗнеки ҫине колхозниксен ӗҫсене ҫав тери йӗркесӗр, вуласа тухмала мар ҫырни тата акӑ мӗнҫинчен шухӑшлаттарать. Бригадирсене пирӗн сахал вӗрентеҫҫӗ. Мӗншӗн-ха колхоз председателӗсемпе счетовочӗсен вӑхӑтран вӑхӑта бригадирсем ӗҫкунӗсене мӗнле ҫырса пынисене пӑхса тухас мар?

Ӗҫ кӗнеки вӑл—пули-пулми документ мар, терӗмӗр. Ӑна кашни колхозникӑнах пӑхса усрама пӗлес пулать. Председателсен, бригадирсен ҫак документӑн пысӑк пӗлтерӗшне йаланах астуса тӑрас пулать. Халӑх тӑшманӗсем, май пулсан, ҫак кӗнекепе те усӑ курма пултараҫҫӗ. Ҫакна манма кирлӗ мар.

В. Долгов.

Ҫӗмӗрлери ултӑмӗш суйлав участкинче

6-мӗш суйлав участкинчи суйлавҫӑсем хӑйсен пухӑвӗсенче Аслӑ Совета депутата суйлама палӑртнӑ кандидатсен автобиографийӗсемпе паллашаҫҫӗ. Пӗтӗмпе кун пек пухусем 3 хутчен туса ирттернӗ. 2 хутчен йатарласах килтуҫи арӑмӗсемпе пуху туса ирттернӗ. Суйлавҫасем хушшинче 20 агитатор ӗҫлет. Вӗсем кашни суйлавҫӑна суйлав йӗрки ҫинчен тата Чкалов, Краснов, Новиков кандидатсен пурнӑҫӗсемпе ӗҫӗсем ҫинчен каласа параҫҫӗ.

6-мӗш суйлав участки суйлав кунӗнче суйлавҫӑсене кӗтсе илме хатӗр. Суйлавҫӑсем вальли 12 пӳлӗм хатӗрленӗ. Кунсӑр пуҫне пӗчӗк ачасем вальли уйрӑм пӳлӗм, хӗрлӗ кӗтес пулать. Буфет организациленӗ. Суйлавҫӑсем пӑтранса ан ҫӳреччӗр тесе йӗрке тунӑ. Ку йӗрке тӑрӑх суйлама пыракан ҫын малтанах буфет умне тухать, унтан канмали пӳлӗме, йе пӗчӗк ачасен пӳлӗмне кӗрсе тухать те секретартан бюллетенсене илсе уйрӑм пӳлӗме кӗрет. Пӗр-пӗринпе хирӗҫ пуласран, ҫавӑрӑнса каллех суйлав урни патне пырать.

Кашни суйлав пӳлӗмӗнче суйлав бюллетенне мӗнле йӗркелемелине калакан памйаткӑсем пулаҫҫӗ.

* * *

Рабкооп суйлав кунӗнче суйлав участкисенче сута тума 4 буфет организациленӗ. Ку буфетсенче ҫимели, ӗҫмели тата туртмали йапаласем пурте пур. Кӗнеке магазинӗ те участкӑсенче куҫса ҫӳрекен киоскӑсем организацилет.

(Хамӑр инфор.)

Вӑл Сталин панӑ маршрута пурнӑҫлать

Епӗр патша саманинчи йавӑр пурнӑҫа лайӑх пӗлетпӗр. Ун чухнехи чуралӑ, выҫлӑ, тӗттӗм те асаплӑ пурнӑҫа аса илсен йӗрес килет. Ҫавӑнпа та вӗсене аса илсе хальхи савӑнӑҫлӑ чӗрене хурлантарас килмест. Ун чухне чухӑн хӗрарӑмсем кӑна мар, чухӑн пур нӑҫпа пурӑнакан арҫынсем те ҫын тивӗҫӗнче пулман. Вӗсем ӗмӗр-ӗмӗрӗпех чуралӑхра выҫӑ пурӑннӑ.

Халӗ 20 ҫул хушши ӗнтӗ телейлӗ пурнӑҫпа пурӑнатпӑр. Тӑван ҫӗршыв ӳсет, пурнӑҫ пуйанланать. Ӗҫлеме, вӗренме, канма, ватӑлсан государствӑран пулӑшу илме права пур. Вӗсене социализмла ҫӗршывӑн Тӗп Саккунӗ—Сталинла Конституци ҫине ҫырса хунӑ. Пирӗн пурин те Аслӑ Совета суйлама тата суйланма права пур.

Ӗлӗк чухӑн пурнӑҫпа пурӑннӑ ҫынсем пайан пуйан пурнӑҫпа пурӑнаҫҫӗ. Вӗсен ҫӑкӑр, сӗт—ҫу, аш—какай тата ытти пахча-ҫимӗҫӗсем ҫителӗклӗ. Килкарти тулли чӑх-чӗп, хур-кӑвакал, сурӑхсем, сыснасем, ӗне тата ытти выльӑх-чӗрлӗхсем. Ҫӗр хамӑрӑн. Вӑл никӑҫан та ӗлӗкхи пек акӑнмасӑр йулмасть. Акмали вӑрлӑх хатӗр, ӑна суртласа хунӑ. Лашасем, плугсем, сӳресем те хатӗр. Колхозсенче тракторсем, комбайнсем, т. ыт. йалхуҫалӑх машинӗсем те пур, весем колхозри ӗҫе ҫӑмӑллатрӗҫ. Ӗҫ савӑнӑҫлӑ, числӑ.

Ҫавӑн пек тулӑклӑ колхозлӑ пурнӑҫа Сталин йулташ, большевиксем Совет влаҫӗ туса пачӗ. Ҫавӑнпа та пулас суйлавра Ленин—Сталин парти ӗҫне чӗререн пурнӑҫласа пыракансемшӗн сасӑланипе, епӗр хамӑрӑн ыранхи татах та пуйан, татах та савӑнӑҫлӑ татах та телейлӗ пурнӑҫшӑн сасӑлатпӑр. ССР Союзӗн Аслӑ Советне, хамӑр влаҫӑн аслӑ органне суйлас кун сывхарса ҫитрӗ. Епӗр В. П. Чкалов, А. М. Краснов тата А. М. Розанов йулташсемшӗн сасӑлатпӑр. Вӗсем пирӗн кандидатсем. Вӗсем Ленин—Сталин парти ӗҫне чӗререн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

А. М. Краснов йулташ йертсе пынипе пирӗн районри „Крестьянская газета" колхоз кунран-кун ҫирӗпленсе пырать, колхозниксем пуйан та культурлӑ пурнӑҫпа пурӑнаҫҫӗ. А. М. Краснов йулташа правителствӑ Хӗрлӗ Ӗҫ Йалав орденӗпе наградӑларӗ. Вӑл ҫирӗп большевик, Ленин—Сталин парти шанчӑклӑ ывӑлӗ.

А. М. Розанов йулташ та ҫирӗп большевик, вӑл халӑх тӑшманӗсене троцкиссене, бухаринцӑсене тата буржуалӑ националиссене тымарӗпех кӑклас тӗлӗшпе ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлерӗ, ӗҫлет те.

В. П. Чкалов йулташ Совет Союзӗн Геройӗ, вӑл Сталин панӑ маршрута икӗ хутчен пурнӑҫларӗ. Мускавран Ҫурҫӗр полюсӗ урлӑ Ҫурҫӗрти Америкӑна тӳрӗ ҫул хывре. Вӑл пирӗн социализмлӑ ҫӗршыва мухтава кӑларчӗ.

Вӗсене пурне те Сталин йулташ пӑхса ӳстернӗ, вӗсем пирӗн ҫӗршывӑн чи шанчӑклӑ, чи лайӑх ҫыннисем, Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн, ӗҫҫыннисен пуйан та телейлӗ пурнӑҫӗшӗн пӗтӗм вӑй-хӑватпа ӗҫлекенсем. Епӗр вӗсемшӗн сасӑлатпӑр.

Соловйова,
А. Соловйов.

Пушкар йалӗ,
Йетӗрне районӗ.

Харитонова йулташ патне килнӗ ҫыру

Пайан № хулинчен парадран таврӑнсан „Чӑваш Коммунӗ" хаҫата вуларӑм. Унта, Сире Национальнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидата палӑртнине вуласа пӗлтӗм, ӑна епӗ виҫ тӑватӑ хутчен вуласа тухсан, хамӑрпа пӗрле пурнакан чӑваш красноармеецсене татах тепӗр хут вуласа патӑм. Епӗ, Сирӗнпе пӗрле ӗҫленӗскер, сире аван пӗлетӗп, ҫавӑнпа сирӗн биографине чӑваш красноармейцисене каласа патӑм.

Ольга Тихоновна! Есӗр шанчӑклӑ та ҫирӗп йертсе пыракан пулса тӑнине—колхозниксем сирӗн ҫине шанӑҫ хурса Национальнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидата тӑратни ҫавна аванах кӑтартса парать. Суйлав кунӗнче епӗ хамӑр округра пулаймастӑп. Анчах епӗ те сирӗншӗн колхозниксемпе пӗр шухӑшлӑ пулатӑп.

Салампа: З. С. Быков.

Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (болъшевиксен) Партийĕн Тĕп Комитечĕ чĕнсе калавине пĕтĕм чăваш халăхĕ пысăк хаваслăхпа саламлать

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлатпăр

Шупашкар хули

Епĕр, Чăвашсен коммунисла ялхуçалăх шкулĕн студенчĕсемпе преподавателĕсем тата унта ĕçлекенсем, митинга пухăнса ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ пур суйлавçăсене—рабочисене, работницăсене, хресчен тата хресчен хĕрарăмĕсене, Хĕрлĕ çара, совет интеллигенцине чĕнсе калавине итлесĕ хыççăн, тăван çĕршыв—ССР Союзне тата та хăватларах державă тăвассишĕн промышленнăçа пур капиталисăмла государствăсенчен те мала ярассишĕн хамăр вăйа паратпăр. Епĕр халăхсен хушшинче тăванлăха тата ытăрах çирĕплетессишĕн, наукăна, литературăна, искусствăна тата та ытларах вăйлатассишĕн тăрăшатпăр. Епĕр халăх тăшманĕсене тĕппипех пĕтерессишĕн, хамăрăн карательнăй оргăнсемпе хисеплĕ Хĕрлĕ çара çирĕплетессишĕн кĕрешетпĕр. Çавăнпа та декабрĕн 12-мĕшĕнче пурте пĕр харăс суйлава кайса хамăр сасăсене коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн паратпăр.

Епĕр пур суйлавçăсене те коммунис-кандидатсемшĕн, партире тăман кандидатсемшĕн пĕр шухăшлă пулса сасăлама чĕнетпĕр.

Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (болъшевиксен) Партийĕ!

Сывă пултăр совет влаçĕ!

Сывă пултăр аслă Сталин йулташ!

Канаш районĕ

КАНАШ, декабрĕн 9-мĕш (телефон тăрăх). Канашри вагонсем юсакан заводри рабочисем, инженерла-техникла работниксем тата служăщисем ПСК(б) Партин Тĕп Комитечĕ пур суйлавçăсене, рабочисене, работницăсене, хресченсене тата хресчен хĕрарăмĕсене, Хĕрлĕ çара, совет интеллигенцине чĕнсе калавине, пĕтĕм чĕрен, пĕтĕм кăмăлтан ырласçĕ. 8-мĕш суйлав участкинчи суйлавçăсем хăйсен резолюцинче çапла çыраççĕ:

„Епĕр, 8 мĕш суйлав участкинчи суйлавçăсем ПСК(б) Партин Тĕп Комитечĕ чĕнсе калавине сăтсе йаврăмăр. Ку чĕнĕве пĕтĕм кăмăлпа ырлатпăр. Пĕтĕм суйлавçăсене декабрĕн 12-мĕшĕнче епĕр кăмăллă пулса хамăр çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçлама чĕнетпĕр. Партипе совет организацисене çакна шантарса калатпăр:

Епĕр, партире тăракан тата партире тăман суйлавçăсем, пурсăмăр та пĕрлĕхлĕ пулса коммунис-кандидатсемшĕн те, партире тăман кандидатсемшĕн те пĕр кăмăллăн сасăлатпăр.

Коммуниссен партийĕ тата унăн çулпуçĕ асла Сталин йулташ йертсе пынипе пирĕн социалисăмла çĕршыв нихăçан пулман калама çук пысăк çĕнтерӳсем турĕ. ССР Союзĕ никам пырса тĕкĕнми çирĕп, хăватлă социалисăмла державă пулса тăчĕ. Епĕр хамăр çĕршыва малашне те çирĕп, хăватлă тата культурăлă советла социалисăмла çĕршыв тăвасшăн. Çавăнпа та хамăр сасăсене пирĕн çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсемшĕн—Чкалов, Горкин тата Цыганова йулташсемшĕн паратпăр.

Епĕр коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пĕр кăмăллă пулса сасăлатпăр. Пурте суйлава!

Совет государствин Аслă оргăнне суйламалли пулас суйлавра коммуниссемпе партире тăманнисен союзĕ сывă пултăр!

Сывă пултăр ПСК(б) Партийĕ тата унăн çулпуçĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен чи лайăх тусĕ Сталин йулташ!"

Патăрйел районĕ

ПАТĂРЙЕЛ, декабрĕн 9 мĕшĕ (телефон тăрăх) Районри колхозсемпе учрежденисенчи ĕçсыннисем Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (болъшевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ чĕнсе калавине нихăçан пулман хаваслăхпа сӳтсе йаваççĕ, ку чĕнĕве пысăк хаваслăхпа ырлаççĕ. Педучилищăпа районри колхоз шкулĕнче вĕренекенсем тата „Красное Батырево" колхозри ĕçсыннисем çапла калаççĕ:

— Социалисăм строителствинчи çĕнтерӳсем-вĕсем пурте коммуниссен партийĕ йертсе пынипе пулнă. Совет халăхне коммуниссен партийĕ телейлĕ те пуйан пурнăç туса пачĕ. Пирĕн тăван ПСК(б) Парти, пĕтĕм ĕçсыннисемпе таччăн çыхăнса ĕçлет, ĕçсыннисен интересĕсемшĕн кĕрешет. Пирĕн шухăш, пирĕн ĕмĕт, пирĕн пуласлăх—коммуниссен партипе пĕрле таччăн çыхăнса тăрать. Епĕр партире тăман болъшевиксем Аслă Совет суйлавне коммуниссен партийĕпе пĕрле пĕр шухăшлă пулса иртеретпĕр.

Епĕр коммуниссемпе пĕрлĕхлĕ пулса Аслă Совета депутата суйлама хамăр палăртнă кандидатсемшĕн—В. П. Чкалов, Л. С. Спасов тата О. Т. Харитонова йулташсемшĕн сасăлатпăр. Вĕсем ПСК(б) Партин тата совет халăхĕн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсем пулса тăнине, вĕсем Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, совет халăхĕсен телейлĕ пурнăçĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнине епĕр лайăх пĕлетпĕр.

Сĕнтĕрвăрри районĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, декабрĕн 9-мĕшĕ (телефон тăрăх). ПСК(б) Партин Тĕп Комитечĕ чĕнсе калавине илсенех, районри колхозсене 63 агитатор тухса кайрĕç. Вĕсем пайан пĕтĕм колхозсенче, предприйатисемпе учрежденисенче рабочисен, инженерла-техникла работниксен, колхозниксен тата служащисен пухувĕсенче пулаççĕ. Вăл пухусене хашпĕр çĕрте иртернĕ те ĕнтĕ. Агитаторсем пĕлтерне тăрăх, пухусем политикăла пысăк хастарлăхпа пулса иртеççĕ. Кивĕ Тутайкасси колхозĕнчи 80 çулхи колхозник Терентйев йулташ пухура çапла каланă:

— Патша саманинче çимелĕх çăкăр нихăçан та пулман манăн. Кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ, çапах та йаланах выçă пуранна. Халĕ манăн çемйе 660 ĕçкунĕ турĕ. Кашни ĕçкунне 12,5 килограм тивет. Çапла вара 500 пăт ытла тырă илетпĕр. Ку тырă виçĕ çул пуранма çитет пире. Патша саманинче кунчухлĕ тырă тĕлĕкре те курман епер. Кам пачĕ çакан чухлĕ тырă манăн семйене? Коммуниссен партийĕ туса панă колхозла пурнăç пачĕ. Сталин атте пачĕ çакăн пек пуйан пурнăçа. Спасибă коммуниссен партине! Спасиба Сталина! Камшăн сасалатпăр епĕр? Ленин—Сталин партишĕн, унăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсемшĕн—Чкалов, Сахйанова тата Андрейева йулташсемшĕн сасăлатпăр.

Партн Тĕпкомĕ чĕнсе каланине ырлаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, декабрĕн 9-мĕш (хамăр корр.). Енер комбинатра каçхи сменăсенче ĕçлекен рабочисен митингĕсем пулса иртрĕç. Рабочисем парти Тĕпкомĕ чĕнсе каланине тулли кăмăлпа йышăнса илчĕç.

— Епĕр, рабочисем, декабрĕн 12-мĕшĕнче суйлав урнисем патне пырса, чи лайăх çынсене Аслă Совет депутатне суйлатпăр. Ку вăл пирĕншĕн çав тери пысăк числă задачă—терĕ Константинов йулташ—столярнăй цехри рабочи.

Комбинатра ĕçлекен рабочисен митингĕнче йышăннă резолюцинче çапла каланă:

— Епĕр, комбинатри рабочисем, парти Тĕпкомĕ чĕнсе каланине пĕтĕм кăмăлпа йышăнса саламлатпăр. Декабрĕн 12-мĕшĕнче суйлав урнисем патне кайса хамăрăн тăван çĕршывăн тивĕçлĕ çыннисемшĕн — Чкаловшăн, Красновшăн, Новиковшăн сасăлатпăр. Çавăнпа пĕрлех пĕтĕм Çĕмĕрле районĕнчи суйлавçăсене çав кандидатсемшĕн сасăлама сĕнетпĕр.

Пайан ;кăнтарла ирхи сменăра ĕçлекен рабочисен митингĕсем пулса иртрĕç.

500 çынлă пуху

ТРАК, декабрĕн 9-мĕш (телефон тăрăх). Декабрĕн 8-мĕшĕнчи пек вăйлă, пысăк пуху Исаково йалĕнче халичен пулман. Пайан Исаково колхозĕнче ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата палăртнă чăваш халăхĕн тивĕçлĕ те мухтавлă хĕрĕ З. А. Андрейева йулташ пулчĕ. Исаково суйлав участкине кĕрекен колхозсен урамĕсем, колхозниксен çуртĕсем хĕрлĕ хăмачсемпе, партипе правителствăн çулпуçĕсен сăнĕсемпе илемленнĕ Суйлав участки центрĕ—Исаково аслă праçник чухнехи пек шавлă та хаваслă.

Каçхине суйлавçăсен аслă пухувĕ пулчĕ. Пухува 500 çын ытла пуçтаранчĕ. Çак аслă пухура Андрейева йулташ хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Ун хыççăн колхозниксем пĕрин хыççăн тепри колхозри телейлĕ те савăнăçлă пурнăç çинчен, ĕлĕкхи саманари ылханлă пурнăç çинчен каларĕç. 89 çулхи старик Васили Никитин сăмахĕ пухува пуçтаранчă çынсене питех те кăмăла карĕ. Вăл патша саманинче ĕçхресченĕсем мĕнле нуша тӳссе пурăннине, халĕ мĕнле телейлĕ пурăннине, çак телейе халăхсен асла çулпуçĕ Сталин йулташ туса панине хăйĕн пурнăçĕнчи примерсемпе кăтартрĕ.

Пуху пĕр сасăпах декабрĕн 12-мĕшĕнче коммуниссем партире тăман ĕçсыннисемпе, рабочисемпе, служащисемпе, совет интеллигенципе блок, союз туса тăратнă кандидатсемшĕн: Андрейева, Чкалов, Краснов йулташсемшĕн сасăлама пулса сăмах пачĕ. Çавăн пекех пуху çитес çулта вăйла тырпул туса илес тĕлĕшпе нихăçанхинчен те вăйлăн кĕрешме пулчĕ.

И. Михайлов.

Йаманкас суйлав участкинче

(Роман Петров агитаторпа калаçни)

Национальнăçсен Советне депутата суйлама Канаш Суйлав округĕ тăрăх палăртнă кандидат ССРС Тĕпĕçтăвком секретарĕ Горкин йулташ Йаманкаса пырсан, пĕтĕм колхоз хуçалăхне пăхса çаврăнчĕ. Колхозниксем хăйсен тивĕçлĕ кандидатĕнчен мухтав сăмахĕсем нумай илтрĕç. Анчах суйлав участкине кĕрсен Горкин йулташăн кăмăлĕ тата ытларах уçăлса кайрĕ.

— Пултаратăр есĕр, йулташсем!—терĕ вăл суйлав иртермели çуртăн ăшчиккине пăхса çаврăнса.

— Сасăламали пӳлĕмсене шпалер çыпăçтарма шутлатпăр-ха,—ответлерĕмĕр епĕр.

Горкин йулташ çавăнтах:

— Çук, ку ытлашшипех пулать,—тесе асăрхаттарчĕ пире.

Пирĕн участкăра 516 суйлавçă. Суйлав иртермели вырăн—колхоз клубенче. Унта савалавă çĕнĕ хăмасем çапса 5 кабинă тунă. Кабинăсен талăкĕсем таччăн хупăнаççĕ. Кашни кабинăра сĕтел, пукан, чечек, лампă, чернилницă, ручкăпа перо, карандашсем, пепĕлницă. Кабинăра тăвăр мар, çутă, таса. Клуба Сталинла Конституци çинчен калакан плакатсемпе, лозунгсемпе, çулпуçĕсен портречĕсемпе илемлетнĕ. Кунтах, портретсем хушшинче, пирĕн тивĕçлĕ кандидатсен—Чкалов, Цыганова, Горкин йулташсен сăн-ӳкерчĕкĕсемпе биографийĕсем.

Суйлавçă кунта çухалса кайма пултараймасть. Ăна ăçтан кĕрсе, ăçтан тухмалине, суйлав комиççийе ăçта ларнине вывескăсемпе кăтартса панă.

Клуб çурчĕпе хире-хирĕç çуртра 60—70 ача вырнаçмалăх ачасен йаслий уçăлать, клубра пĕр кĕтесре буфет пулать.

Йаманкас ĕçсыннисем суйлава пур йенчен те хатĕр. Йалсовечĕ суйлавçăсен спискисене тĕплĕн пăхса тухса тӳрлетсе çитерне. Епĕр суйлавçăсене Сталинла Конституципе суйлав Положенине ăнлантарса парас тĕлĕшпе тăрăшсах ĕçлерĕмĕр. Малтанах хамăр, агитаторсем, йалта учителсем иртерекен семинарсенче вĕрентĕмĕр. Унтан пире кашнине 5 килĕ уйăрса парса çирĕплетрĕç. Халĕ ик вĕренмесĕр йулнă ватă çынсем патне килĕсене кайса вĕрентетпĕр. Кунсăр пуçне, суйлав саккунĕсем çинчен колхозниксен пĕрлехи пухувĕсенче, уйрăмшерĕн пухнă хĕрарăмсен, ваттисен, çамрăксен, оригадăсен пухăвĕсенче тĕплĕн каласа ăнлантарнă. Пирĕн йалта халĕ суйлав саккунне пĕлмен çын çук. Епĕр пурте Чкалов, Горкин, Цыганова йулташсен кандидатурисемшĕн сасăлатпăр.

Çапла каласа пачĕ Канаш районĕнчи Йаманкас суйлав участкинче ĕçлекен агитатор Роман Петров хăйĕн ĕçĕсем çинчен.

Роман Петров 53 çулти колхозник. Вăл ĕлекхи саманара нимĕнле шкулта та вĕренмен. Совет влаçĕ пуçланиччен вăл çырма та вулама та пĕлмен. Роман Петрович хăй тĕлĕн вĕренсе пырса кенекесем, хаçат-журналсем вуласа, хăйне вальли нумай пĕлӳ илчĕ. Халĕ вăл иккĕмĕш çул ĕнтĕ колхоз клубĕн хĕрӳлĕ заведуйушчийĕ, ĕçсыннисен сывăх агитаторĕ пулса ĕçлет.

Арк Ĕçхĕл.



Цыганова Йевдокийа Петровна—Куславкка комбинатĕнчи стахановкă. Союз Советне депутата суйлама Канашри №-365 суйлав округĕнче регистрациленĕ.

Андрейева Зойа Ананйевна—Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ. Союз Советне депутата суйлама Шупашкарти №-364 суйлав округĕнче регистрациленĕ.

В. П. Чкалов йулташ пионерсем патĕнче

Каç пулса килчĕ. Шупашкарти шкулсенчи пионерсем Пионерсен тĕп çуртнеле утма тытăнчĕç. Вĕсем пайан калама çук хаваслă. Вĕсем пайан Национальнăçсен Советне РСФС Республикĕнчен депутата суйлама Горьки" суйлав округĕ тăрăх палăртнă кандидат—Совет Союз Геройĕ Валерий Павлович Чкалов йулташпа тĕл пулаççĕ.

Кашни пионер, октябренок Чкалов камне пĕлет. Ун çинчен çырнă кĕнекесене вĕсем нумай вуланă. Унăн самолётне вĕсем нумай хутчен картинă ӳкерне. Акă пайан вĕсем çав çынпа хăйĕнпе тĕл пулса калаçаççĕ! Вăл кашни пионер кăмалне çĕклентерет.

Вăхăт 8 сехет. Зала ачасем туллийех тулчĕç. Сценă çинче кăвар тĕслĕ занавескă çакăнса тăрать. Унта Совет Союз Геройĕн В. П. Чкалов йулташăн портречĕ. Йĕри тавра пĕчĕк електролампăсем Чкалов сăнне çутатса тăраççĕ, çӳле „Сывă пултăр Сталинла сокол В. П. Чкалов!" тесе çырнă лозунг çапнă. Икĕ йенче икĕ пысăк пальмă. Сĕтел çинче чечек тытнă пĕчĕк хĕрача Сталин йулташа ыталанă икĕ бӳст ларать.

Пионерсем хумханаççĕ. Вĕсен часрах Чкалов йулташа курас килет. Малти ретре „Ну, как не запевать" йурăна йанăратса йачĕç. Зал ачасен çепĕç йуррипе чĕтренсе тăрать.

— Т-с-с, Чкалов килчĕ,—илтĕнчĕ сасă. Ачасем шăпланчĕç. Ниçта та пĕр сас-чӳ çук. Акă сценă çине В. П. Чкалов, комсомол хула комитечĕн секретарĕ Асафйев, парти Обком секратарĕ Г. Иванов т. ыт. йулташсем тухса тăчĕç. Ачасем пурте пĕр харăссăн:

— Çĕршывăн паттăр летчикне Чкалов йулташа салам! Урра!—кăшкăраççĕ, тăвăллăн ала çупаççĕ. Валерий Павлович Чкалов хăй те ала çупать.

Сценă çине 1-мĕш номерлĕ шкулта 4-мĕш класра вĕренекен отличницă пионеркă Галя Александрова улăхрĕ. Вăл Чкалов умне пырса: Сире, Валерий Павлович Чкалов йулташ, пирĕн пионерсен хĕрӳлĕ салам!—тесе калать. Залра каллех „урра" йанăраса кайать. Галя хăй сăмахне малала тăсать:—Епĕ Чкалов [illegible] тăнине, ăна епĕ хамăн куçсемпе курнине манăн ĕненес те килмест. Чкалов йулташ, пирĕн [illegible] аннесем хăйсен сасексене сирĕншĕн параççĕ. Епĕр, вĕренекенсем, суйлава отличнă [illegible] кĕтсе илетпĕр. Чкалов йулташ, епĕ [illegible] лĕтчикă пулатăп,—терĕ. Залра каллех „урра" [illegible] ала çупаççĕ. Çак вăхăтра Чкалов йулташ Галяна ытал[illegible]. Галя Чкалов йулташ [illegible].

— Чкалов йулташ, Мускава çитсен, пире çавăн пек лайăх телейлĕ пурнăç туса панăшăн Сталин йулташа пирĕн[illegible] Чкалов йулташ Галяна [illegible] нашăр пукан çине лартать.

Сценă çине Крупкай [illegible] тăракан шкултан Андрйуçа Степкин хăпарать.

— Епĕр йумахра [illegible] пурнăçра тăватпăр, ăна сирĕн [illegible] çевсем лайăх кăтартса параççĕ,—тет Андрйуçа Чкалов çине [illegible].

6-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекен Тайа Григорйева:

— Чкалов йулташ, епĕр сирĕн биографийе [illegible] ĕçĕрсене [illegible]. Тата пирĕн поетсем сирĕн çинчен çырнă сăвăсене [illegible] пĕр—тесе калать. Унтан „Сталинский сокол" ятлă сăвă [illegible] кăтартать.

„Ачасем,—тет Чкалов йулташ,—епĕ чирлерĕм, манăн пыр ыратать, анчах та Сире ытараймасăр йуратса епĕр Çурçĕр полюсĕ урлă Çурçĕр Америкăна йепле кĕçсе кайни çинчен каласа парам. Ачасем, есĕр мисе полюс пĕлетĕр?—ыйтать вăл.—Иккĕ!—кăшкăраççĕ залран.

— Епĕ вăт 6 полюс пĕлетĕп,—тет те йĕркипе ăнлантарать:—Широтан 82 градусĕнчен пуçласа çурçĕре 90 градуса çитеччен пирĕ çитрĕ. Кунта ĕлĕк никам та çитсе курман. Çавăнпа та ăна никам çитсе курман вырăн те е калавă. Халь апла мар. Епĕр унтан вĕçсе иртрĕмĕр. Чăнах та, вĕçес ĕç çăмăл мар, малтан пĕлес, вĕренес пулать. Илĕр партипе правителствă хамăра пана са панă ĕçе пурнăçа кĕртрĕмĕр. Вăл пирĕншĕн çеç мар, пĕтĕм Совет-Союзĕшĕн чаплă ĕç. Çак ĕç вăл пирĕн çĕршывăн, халăхсен культурлийе, промышленнăç вăйлине, авиаци техники вăйлине, сыпăлăш флочĕ вăйлине пĕлтерет,—тет Чкалов йулташ. Унтан вĕсене Америкăра йепле йышăнса илни çинчен каласа парать.

Ачасем унăн сăмахне калама çук пысăккăн интересленсе итлеççĕ.

Чкалов йулташ ачасемпе ăшшăн сыв пуллашса уйăрăлчĕ,

Йулашкинчен Пионерсен çуртĕнче хаваслă концерт пулчĕ.

Шупашкар хулинчи ачасем декабрĕн 8-мĕшĕнче Валерий Павлович Чкаловпа тĕлпулнине ĕмĕрте те манас çук.

Валя Андрейева

В. П. Чкалов йулташа чысласа концерт пулчĕ

Пирĕн хаклă хăна, Национальнăçсен Советне депутата суйлама Горьки Суйлав округĕнче регистрациленĕ тивĕçлĕ кандидат—Совет Союз Геройĕ полковник Валерий Павлович Чкалов Чăваш республикине килнине чысласа, декабрĕн 8-мĕшĕнче каçхине академилĕ театрта концерт пулса иртрĕ.

Концерт 9 сехетре пуçланмалла. Анчах театр 8 сехатрех халăхпа тулса ларнă. Пурте Чкалов йулташа кĕтеççĕ.

Акă вăл, халăхсен йуратнă çулпуçĕ аслă Сталин пахса ӳстернĕ хăйулă сокол, пĕтĕм халăх йуратакан Чкалов пырса кĕрет.

Театрта чăн-чăн вăйлă çилтăвăл вăхăтĕнчи пек хаватлă шав кĕрлесе кайать. Пурте ура çине тăраççĕ. Мĕн пур кĕтессенчен:

— Сывă пултăр йуратнă çулпуç Сталин йулташ! Сывă пултăр пирĕн хаклă кандидат Валерий Павлович Чкалов! Телейлă ача амăшĕсенчен Сталин йулташа хĕрӳлĕ салам! Сывă пултăр сталинла ăмăрткайăк Чкалов йулташ!—тесе саламланисем илтĕнеççĕ. „Урра" кăшкăрни, болъшевиксен партипе унăн çулпуçне Сталин йулташа саламласа овацисем туни 10 минута йахăн тăсăлать.

Тăвăллăн ала çупни вăхăтлăха лăпланать. Чăваш государствă филармонин аслă дирижорĕ Благодатов й. концерта уçса, искусства работникĕсен йачĕпе декабрĕн 12-мĕшĕнче мĕн пур суйлавçăсене пурте пĕр шухăшлă пулса, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн—Андрейева, Стецкий тата Чкалов йулташсемшĕн сасăлама чĕнсен, оваци тепĕр хут вăйланса кайать. Пурте ура çине тăрса ала çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ. Оркестр „Интернационал" выльать.

Концерт программине чăваш музыкĕн произведенисем пулчĕç. Симфони оркестрĕ Кривоносован „Айдар" пиеса вальли çырнă музыкине выляса пачĕ, Казакова „Хаваслăх" ятлă музыкăлă комедирен ари йурларĕ. Чăваш государствă хорĕ чылай йурăсем йурларĕ т. ыт.

Концерт 11 сехет иртсен тин пĕтрĕ. Чкалов йулташ концертра мĕн пуçласа вĕçне çитиччен ларчĕ.

С. К.

Тăван çĕршыв хуралĕнче

Красноармейец çырăвĕ.

Епĕр Украинăри №-чаçĕнчи чăваш красноармейецсем пĕр-пĕрин хушшинче ăмăрту договорĕ турăмăр. Договорта: вĕренӳре отличниксем пулас; Сталинла Конституцине, Аслă Совета суйламали Положение лайăх вĕренес; уйăхра икĕ илемлĕ литературă кĕнеки вуласа тухса мĕн вуланине курсантсем хушшинче каласа парас; кашниех 3—4 значокрăн кайа илес мар, тесе йышăнтăмăр.

Договор пурнăçа кĕрет. Епĕр кайа йулса пыракансене пулăшатпăр.

Договор тунăранпа епĕ илемлĕ литературă кĕнекисем чылай вуларăм. „Петр I", „Цусима", „История гражданской войны", „Партийный билет № 0046340", „Мать", „Как закалялась сталь", „Непобежденный пленник", „Поднятая целина", „Железный поток" йатлă произведенисем нихçан та асран кайас çук. Вĕсем мана питĕ интереслентерчĕç.

Фашисла шпионсене, диверсантсене епĕр кашни минутрах отпор пама хатĕр.

Красноармейец—С. А. Одинцов.

Суйлавçăсем хăйсен сасĕсене тивĕçлĕ кандидатсемшĕн пама хатĕр

ÇĔМĔРЛЕ. Хутар подрайонĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, рабочисемпе служăщисем декабрĕн 12-мĕшне—ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали куна пысăк хаваслăхпа, тулли кăмăлпа кĕтсе илеççĕ.

Йалсенче, колхозсенче суйлава хатĕрленнĕ май, суйлавçăсен пуххисем пулса иртеççĕ. Пухура уйрăмăнах „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенин" статйисемпе паллашаççĕ. Агитаторсем Аслă Совет депутатне суйлама регистрациленĕ кандидатурăсем çинчен ăнлантарса параççĕ. Суйлавçăсем ĕлĕкхи асаплă пурнăçа хурласа, хальхи савăнăçлă та телейлĕ пурнăçа ырласа калаççĕ.

— Епĕ суйлав кунĕ хăмăн сасса Сталин саманинче ӳснĕ—Совет Союзĕн геройĕ В. П. Чкаловшăн, колхозниксене пуйан та культурăлă пурнăçпа пурăнма тӳрĕс çулпа йертсе пыракан чаплă колхоз председателĕ орденоносец Красновшăн, халăх тăшманĕсемпе кĕрешме пултаракан, ĕçхалăхĕн телейлĕ пурнăçĕшĕн тăрăшакан çирĕп болъшевик Новиковшăн паратăп.

Çакăн пек телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса паракан Аслă Сталина епĕ тав тăватăп. Епĕ халĕ 73 çулхи старик пулсан та хама хам 20 çулхи пек çамрăк шутлатăп, тет Йегоркинăри „Большевик" колхоз членĕ Иа. А. Оргейев йулташ.

Оргейев йулташ пекех ытти ватă стариксем те хаваслă.

Йалсенчи суйлав участкисенче куллен кун суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухувĕсем пулса иртеççĕ.

Акă Хутарти суйлав участкинче кашни 3—4 кунта пухусем, савăнăç вечерĕсем пулса иртеççĕ. Нойабрĕн 29-мĕшĕнче, вăтам шкулти пионерсем спектакль лартса пачĕç. Спектакль умĕн суйлав умĕнхи пуху пулчĕ.

Çавăн пекех Турхан, Пронеш, Йегоркинă, Мулкачкасси, Пайандайкинă тата ытти суйлав участкисенче те суйлав умĕнхи пухусем пулса иртрĕç.

Кашни суйлавçăнах ĕмĕчĕсем пысăк. Вĕсем хăйсен сассине Ленин—Сталин парти, халăх ĕçĕшĕн кĕрешекенсемшĕн, ĕçхалăхĕн шанчăклă ывăлĕсемшĕн Чкаловшăн, Красновшăн, Новиковшăн пама хатĕр тăраççĕ.

И. Мозйаков.

Çĕнĕ фабрикăна тума тытăнаççĕ

Шупашкарта резинăран çĕвĕсĕр йапаласем тăвакан фабрикăна тума тытăнаççĕ. 4—5 кун кайарах Огурцов инженерпа строителствă начальникĕ Полонский йулташсем килнĕ. Декабрĕн 20-мĕш тĕлне ле тата 15 инженер килмеле. Вĕсем вальли Калинин урамĕнче 18 хватерлĕ çурт тăваççĕ.

Фабрикă лартмали вырăна радиостанци патне 25 гектар çĕр лаптăкĕ уйăрнă.

Фабрикăна тума Ивановри кирпĕч заводĕнче 2 мĕлйун штука йахăн кирпĕч уйăрса хунă, 2 пин кубла метр йывăç материалĕсем хатĕрленĕ. Йарославль хулинчи фабрикă вальли машинăсем тийесе йанă. Вĕсем халех Шупашкара çитеççĕ.

Фабрикăра 1.500 çын ĕçлемеле. Йанвар уйăхĕнче производствăри ĕçе вĕренме курс уçăлать. Унта пуринчен ытла çамрăксем, комсомолецсем пулаççĕ. Йанвар-феврал уйăхĕсенче ĕçлекенсене Харьков хулине вĕренме йаращçĕ.

Фабрикă 1938 ç. август уйăхĕнче ĕçлеме пуçламала.

ССР Союзĕн ĕççынниcем Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ чĕнсе каланине хĕрӳлĕ саламлаççĕ

„Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ мĕн пур суйлавçăсене, рабочисене, работницăсене, хресченсемпе хресчен хĕрарăмĕсене, Хĕрлĕ çара, совет интеллигенцине чĕнсе каланине „Совет Союзĕн ĕççыннисем питтĕ пысăк хавасланхпа кĕтсе илнĕ.

Çĕршывăн мĕн пур кĕтесĕсенчен Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ чĕнсе каланă майпа нумай халăхла митингсем пулса иртни çинчен пĕлтереççĕ.

Митингсенче йышăннă резолюцисенче Совет государствин Аслă органĕн суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисем никам çĕмĕрейми Союзра пулатпăр, Аслă Совета суйламали историлĕ куна ССР Союзĕн ĕççыннисем нихçан хи пек те мар Ленин—Сталин партийĕ тата унăн Сталинла Тĕп Комитечĕ тавра, ĕççынисен çулпуçĕ, йуратнă Сталин йулташ тавра таччăн пĕтĕçнипе пыратпăр, тесе каланă Ĕççыннисем Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тĕп Комитетне тата Сталин йултаща декабĕрĕн 12 мĕшĕнче хăйсен сассисене коммуниссен партин, хамăр тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсемшĕн—партире тăракансемпе партире тăман большевиксемшĕн паратпăр, тесе ĕнентерсе калаççĕ.

Декабĕрĕн 7-мĕшĕнче Мускаври Сталински суйлав округĕнчи пур предприйатисенче те массăлă митингсем пысăк çĕкленӳпе пулса иртнĕ. Куйбышев йачĕпе тăракан електрозаводра пĕрремĕш сменăн кăнтăрлахи канувĕнче туса иртернĕ каласура 6 пин çын пулнă.—5 пин çын йахăн митингсенче пулнă.

Електрозавод рабочисем пĕр çын пек йышăннă резолюцире çапла калана:

„Аслă Совет Союзĕн ĕççыннисен, рабочисемпе хресченсен хамăрăн тăван большевиксен партисĕр пуçне урăх парти пулман та, пулмаст те. Большевиксен партийĕ суйлава партире тăман рабочисемпе, хресченсемпе, служăшчисемпе тата интеллигенципе блок туса, союз туса тухат. Кун пек парти никам çĕнтерейми хăватлă. Большевиксен партийĕ йертсе пынипе епĕр социалисăмăн çĕнĕ çĕнтерӳвĕсем патне кайатпăр.

Фашиссен лагĕрĕнчи тискерленнĕ бандичĕсем урччăрах,—вĕсем историйе кайала çавăрма пултараймаççĕ.

1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕш кунĕ—ССР Союзĕнчи мĕн пур халăх ĕççыннисен Ленинăн—Сталинăн çĕнтерӳлĕ йалавĕ тавра пĕрлешмели аслă уйав кунĕ пулса тăрат".

Мускаври Трехгорнăй мануфактура фабрикĕнчи цехсенче пулса иртнĕ митингсенче икĕ пин ытла çын пулнă.

„Пирĕн Ленинла—Сталинла Партин Тĕп Комитечĕ хăйĕн чĕнсе каланинче пирĕн шухăшсемпе сисĕмлĕхсене, пĕтĕм совет халăхĕн шухăшĕсемпе сисĕмлĕхĕсене пит те лайăх каланă,—тенĕ хăйсен резолюцинче Трехгорнăй мануфактура рабочийĕсем. „Большевиксен партийĕ суйлава партире тăман рабочисемпе, хресченсемпе, служăшчисемпе тата интеллигенципе çирĕп союз туса тухат. Пĕтĕм ĕç халăх интересĕпе пурнакан, пĕтĕм ĕççыннисен телейĕшĕн кĕрешекен партин урăхла йĕрке пулма та пултарайман.

Епĕр, Трехгорнăй мануфактура рабочийĕсем,—кашни хамăр суйлав округĕ тăрăх,—пурте пĕр çын пек, суйлава тухатпăр тата коммуниссемпе партире тăманнисем пĕрле палăртнă, халăхшăн вăй-хала хурса ĕçлекен кандидатсем пĕн сасăлатпăр".

Харьков районĕнчи Русскайа Лозовайа йалĕнче пысăк митинг пулса иртнĕ. Вăл митингра Косиор йачĕпе тăракан тата „Путь социализма" йалхуçалăх ертелĕсен колхозникĕсем пулнă.

Массăпа тачă çыхăннă тата вĕсен интересĕпе пурнакан большевикла парти йертсе пынипе,—тенĕ митингра колхозник бригадир Моженитов йулташ,—епĕр чаплă çитĕнӳсем турăмăр. Епĕр, Косиор йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем, икĕ пин гектар çĕре тракторсемпе тата ытти шултра йалхуçалăх машинĕсемпе ĕçлетпĕр. Вĕсене пире партипе совет правительстви пана. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче епĕр пурте пĕр çын пек пулса ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйламали хамăрăн пур партире тăракан тата партире тăман кандидатсемшĕн сасăлатпăр.

Пĕр сасăпах йышăннă резолюцире колхозниксем тĕнчери чи демократилĕ Конституци туса паракан, çулпуçа тата учителе Иосиф Виссарионович Сталина саламлаççĕ. Вăл йертсе пынипе большевиксен партийĕ нумай нацилĕ совет халăхĕпе пĕрле социалисăмлă обществă тунине палăртаççĕ.

(ТАСС)

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри тăшмансем суд умĕнче

Иртнĕ кунсенчи пекех, декабĕрĕн 8-мĕшĕнче те суд кунĕпех свидетелсене итлерĕ. „Племзаготконторăн" Канаш участкинче уполномоченнăй пулса ĕçленĕ БЕЛОВ „Племзаготконторăра" мĕнле сăтăрла ĕçсем пулса пыни çинчен каласа пачĕ.

— Канашри базăна пынă йратлă выльăхсене, паллах, апат кирлĕ пулнă. Шулов çав выльăх апачĕшĕн пĕртте тăрăшман,—тет Белов. Ăçта май килнĕ çавăнта тупнă пăсăк апат парса тăратнипе, базăри выльăхсенчен чылайĕшĕ чирлесе кайнă, нумайĕшĕ вилсе пĕтнĕ.

Чирлĕ выльăхсене базăра сыватман, вĕсене сыватмасăрах колхозсене йама хушнă Шулов. Çав май вăра çав выльăхсенчен колхозсен выльăх кĕтĕвĕ çине чирсем куçнă. 1936 çулта Вăрнар районĕнчи колхозсене 40 така сикекен чирпе чирленĕскерсене салатнă. Çавăн пекех чирлĕ вăкăрсене те колхозсене йанă. Выльăхсем чирлĕ пирки колхозсем çав выльăха калле тавăрса йарсан, Шулов тепĕр хут выльăхсене колхоза хăвăлаттарса йанă.

Свидетел Н. И Захаров (ветуправленин начальникĕ) каланă тăрăх, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Амачкинри колхозра сикекен чир 1933 çултах пулнă. Çапла пулсан та ветуправлени начальникĕ пулса ĕçленĕ Михопаркин тата Сĕнтĕрвăрри участкинче выльăх тухтăрĕ пулса ĕçленĕ Орлов çав чире вăхăтра пĕтерме шутламан. Ун çинчен вĕсем пытарса пурăннă.

Михопаркин йертсе пынă ветуправлени Чăваш республикĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пысăк сиен кӳнĕ.

— Хулана сутма илсе килнĕ аш-какайа контроль тăвас ĕçе ветлечебницăра тумала тунине сăтăрла ĕç тесе шутлатăп, мĕншĕн тесен чирлĕ ашран ветлечебницăна илсе килнĕ выльăх çине йе чирлĕ выльăхран таса аш çине чир сикме пултарат. Кунşăн Михопаркин айăплă,—тет Танкейевский.

Свидетел Покровский Тутаркас районĕнче ветврач пулса ĕçленĕ Семйагинăн сăтăрла ĕçĕсем çинчен каласа парат. Чир саралнă вырăнсенче чирпе кĕрешес вырăнне, Семйагин чир çук вырăнсенче ĕçленĕ. Выльăхсем вилме пуçласан çеç вăл çав чир саралнă вырăнсене кайнă.

Свидетел Макаров (госсанинспектор) ветеринари работникĕсем ветеринарипе санитари правилисене пăсса ĕçлени çинчен каласа парат. Чылай çĕрте ветсанитарсемпе ветфельдшерсене аш çине клейме çапма ирĕк панă. Вĕсем чирлĕ аш-какайа чирлĕ маррисенчен уйăрма пĕлмен пирки, чирлĕ, çиме йурăхлă мар аш çине те клеймесем çапаççĕ. Çавăн пирки те 1936 тата 1937 çулта пăсăк аш сутнипе çынсем чирлени те нумай пулнă,—тет Макаров. Ку çеç мар, сикекен чирпе чирленĕ выльăхсене пусса сутма турттарса çӳренипе çав чир саралнă çемĕн саралса пынă.

Макаров свидетĕл те сутмали аш какайа контроль тăвас ĕçе ветлечебницăра тунине сăтăрла ĕç тесе шутлат.—Çав ĕç пирки чи малтанах Михопаркин айăплă,—тет вăл.

Декабĕрĕн 8-мĕшĕнчи каçхи ларура суд свидетĕлсенчен ыйтса пĕтерчĕ. Декабĕрĕн 9-мĕшĕнче каçхи ларура суд государстви обвинителĕн сăмахне итлерĕ.

М. Костин.

Вилĕм вĕсене!

ПАТĂРЙЕЛ, декабĕрĕн 7 мĕш (телефонпа хамăр корр.). Чăваш республикĕнчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре сăтăр туса пурăннă тăшмансене тытса суд умне тăратнă май, районри колхозсенче митингсем, пухусем пулса иртеççĕ. Кив Ахпӳрт йалĕнчи колхозра пулнă пухура Арланов колхозник акă мĕн калат:

— Çĕрĕç халăх комиссариатĕнче ответлă вырăнсенче ларнă тăшмансем пирĕн телейлĕ пурнăçа туртса илесшĕн пулнă, вĕсем Сталинла Конституци паракан аслă правасене пирĕнтен туртса илесшĕн пулнă. Спиридонов, Павлов, Михопаркин, Суриков т. ыт. тăшмансем колхозсене салатса йарса, колхоз хресченĕсене выçтарса вĕлерме тăрăшнă. Анчах тăшмансен ĕмĕчĕ нихçан та пурнăçа кĕмĕ! Халĕ вĕсене тытса тăрă шыв çине кăларнă. Епĕ Аслă Судран çав ылханлă сăтăрçăсене персе пăрахма ыйтатăп.

Патăрйелĕнчи „Путь Ленина" йалхуçалăх ертелĕн колхозникĕсем туса иртернĕ пухура Мышкин полевод çакăн пек сăмах тухса калана:

— Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сăтăрласа пурăннă ирсĕр тăшмансене нимĕнле каçару та пулма пултараймаст. Вĕсене çĕр пичĕ çинчен шăлса ывăтмала. Пирĕн совет влаçĕ, пирĕн тăван коммунисла парти хальхи вăхăтра нихçанхинчен те хăватлă. Пирĕн йуратнă çулпуç Сталин йулташ йертсе пыракан Совет Союзĕнчи халăхсем декабĕрĕн 12-мĕшĕнче суйлав урнисем патне пырса, Аслă Совета чи лайăх çынсене суйласа лартĕç, хамăрăн тăван çĕршыва тата ытларах тĕреклетĕç. Халăх тăшманĕсен сăтăрлă ĕçĕсене ответлесе колхоз стройне хытăрах тĕреклетер, выльăх-чĕрлĕх ытларах ĕрчетер!

Сăтăрçăсен ишĕлтерӳлĕ ĕçĕсем çине тарăхса Сăкăт йалсоветĕнчи колхозсенче те пухусем туса иртернĕ.—Епĕр, колхозниксем, хальхи вăхăтра суд тенкеллисем çинче ларакан тăшмансене Аслă Суд тивĕçлипе айăплассине шансах тăратпăр. Çавăнпа пĕрлех епĕр сăтăрçăсен йулашкийĕсене те йăлтах шыраса тупса, нимĕн хăвармиччен çĕмĕрсе тăкма ыйтатпăр,—терĕ Уфимов колхозник.

Н. Пушкин.

Персе пăрахмала!

ИШЛЕЙ, декабĕрĕн 9-мĕш. (Телефонпа). Декабĕрĕн 6-мĕшĕнче Ишлейре 1938 çулхи çуракине хатĕрленес ыйтупа колхоз председателĕсен районри канашлувĕ пулса иртрĕ. Республикăра социалисăмлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сăтăр туса пынă тăшмансем—Спиридонов, Павлов, Михопаркин, Суриков, Шулов т. ыт. те контрреволюцилĕ сутăнăçлă ĕç тунине пĕлсен, канашлува пухăннисем калама çук хытă тарăхса кайрĕç. Сăтăрçăсен ирсĕр алли Ишлей районне те пырса тĕккĕннĕ. Акă кăçал „Звезда" тата „Самолет" колхозсенче нумай выльăх-чĕрлĕх вилнĕ т. ыт. те.

Канашлу контрреволюцилĕ сăтăрçăсем пирки çакăн пек резолюци йышăнчĕ:

— Епĕр, районри канашлува пухăнă колхоз председателĕсем, Чăваш АССР Аслă Сучĕн Специальнăй Коллегийĕнчен Спиридонова, Павлова, Михопаркина, Шулова тата Орлова чи пысăк наказани парса, персе вĕлерме ыйтатпăр.

П. Архипов.

ССРС Государствă банкĕн
Чăваш республикинчи кантурĕ

1938—39 ВĔРЕНӲ ÇУЛĔНЧЕ

Банкуч шкулне вĕренекенсем илни çинчен

ПĔЛТЕРЕТ

ШКУЛТА 2 ÇУЛ ВĔРЕНМЕЛЕ

Шкула 16 çула çитнĕ граждăнсене, тулли мар вăтам шкул йе вăтам шкулăн 7-мĕш класне пĕтернисене илеççĕ.

Банкуч государствă банкĕн системинче ĕçлеме счетоводсем, бухгалтер помошникĕсем тата бухгалтерсем хатĕрлет.

Вĕренме кĕрекенсем пурте 7 çул вĕренмели программă тăрăх тăван чĕлхепе тата математикăпа испытани тытаççĕ.

Шкула кĕме ыйтса çырнă зайавленисемпе пĕрле Государствă банкĕн Чăваш республикинчи кантурне çак документсене йамала:

1. Автобиографи
2. Вĕренни çинчен справкă
3. Вырăн[illegible] органĕсенчен справкă
4. Сывлăх [illegible]инчен

Шкула илнĕ çынсене обшчежити тата 100 тенкĕ стипенди параççĕ.

Зайавленисене декабĕрĕн 20-мĕшчен йышăнаççĕ.

Госбанкăн Чăваш кантурĕ.

Вулакансене тирпейлĕ хаçат кирлĕ

Хаçатсене пăхса тухни

Партин Хĕрлĕ Чутай райкомĕпе райĕçтăвкомĕн „Çĕнтерӳ çулĕ" хаçатĕнче мĕн çырнине вулакансем ăнланаççĕ-ши?—тесе ыйтас килет пирĕн „Çĕнтерӳ çулĕ" çак ыйту çинчен шухăшламаст, шухăшласшăн та мар.

Акă хăшпĕр фактсем. 91-мĕш номĕр.

„Парти вĕренĕвне заочнă вĕренесси пирĕн районра та çулран çулах саралса пырат. Кăçалхи çул Имзоран заочнă вĕренессипе 100 çынна 4 группăна организациленĕ те ĕнтĕ.

92-мĕш номĕр. „Редакцинче селькорсен, стена хаçачĕпе бригадный газетсен редактăрсен совешчани пулат".

95-мĕш номĕр. „Аслă Совета хамăр тăван çĕршывран чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсенчен суйлар".

97-мĕш номĕр. „...Сталинла Конституци тăрăх тӳрех тата пĕртан икĕ суйлав правипе вăртăн суйлат".

Кунашкал пăтранчăксене вĕçĕ хĕррисĕрех кăтартма пулат. Анчах кунта илсе кăтартнă фактсем те „Çĕнтерӳ çулĕн" чĕлхи вулакансене ăнланмала марри çинчен, хаçат хăйĕн чĕлхине халăх патне çыхвартасшăн тăрăшманни çинчен уççăнах калаççĕ. Пур хаçатсем те „Аслă Совета хамăрăн тăван сершывăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсене суйлар" тесе çырнине „Çĕнтерӳ çулĕн" мĕншĕн пăсмала пулнă вара? Хаçат мĕнле икĕ суйлав прави çинчен çӳпĕлтетет тата? Пирĕн совет граждăнĕсен никамăн та икĕ суйлав прави çукки „Çĕнтерӳ çуле" хаçат халĕ те ан[...] ланмаст пулас.

Ку çеç те мар, хаçат ССР С[...] йузĕн Аслă Советне суйламал[...] Положенине (нойабĕрĕн 22-мĕшĕ[...] че тухнă номĕрте) суйлавçăсен[...] пăсса ăнлантарни, тăшмансене ус[...] лă ĕç туни çинчен „Çĕнтерӳ çулĕ[...] хаçата асăрхаттарни пулнă. Ça[...] йăнăш та, халĕ кăтартнă йăнăшсе[...] те хаçат редакцийĕ çине тăрса[...] суйлавçăсене тĕрĕс çул çинчен пăр[...] са йама тăрăшни çинчен калама[...] çĕ-и вара?

Йулашкинчен хаçата мĕнле п[...] четлесе кăларни çинчен. „Çĕнтер[...] çулĕ" пичетленнĕ чухне редактор[...] йе секретарĕ хаçата типографи[...] пырса курмаççĕ пулас. Хаçат тăл[...] вар пек пичетленсе тухат. Час-ч[...] сах хаçат вырăнне шурă хут[...] краскăпа вараланă хут татки анча[...] пулат.

Тата тепĕр ыйту: редакци хă[...] çанччен вулакансене пĕчĕк фор[...] матлă хаçат вырăнне пысăк фор[...] матлă хаçат кăларма тытăнатпă[...] тесе улталасшăн?

Колхоз театрĕ Çĕмĕрлере

ÇĔМĔРЛЕ (Хамăр корр.). Де[...] кабĕрĕн 5—6 мĕшĕсенче, Йетĕрне[...] ри виççĕмĕш колхоз театрĕ „Бол[...] шевик" завод клубĕнче Г. [...] Осипов драматург çырнă „Айдар[...] драмăна выльаса пачĕ. Икĕ ку[...] хушшинче те спектакль курма ха[...] лăх нумай пычĕ.

Национальнăççен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар Округ № 496 суйлав комиççийĕ

ПĔЛТЕРНИ

Национальнăççен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар Округ № 496 суйлав комиççийĕн адресĕ çапла:

Шупашкар хули, Хресчен çурчĕ, 2-мĕш хутлăх, 11 пӳлĕм.

Телефон: № 2-07. Председателĕн—2-20, Председателĕн хватерĕ—1-42.

Пĕлтерӳ

ССР Союзĕн Аслă Советне суй[...] лас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар[...] округĕ №364 Суйлав Комиççийĕ[...] адресĕ çапла: Шупашкар хули[...] Хресчен çурчĕ, 2 мĕш хутлăх, 8[...] мĕш пӳлĕм.

Телефонсем: Секретарĕн—1—9[...] тата 5—88

Председателĕн—0—83; председ[...] телĕн хватерĕ—1—02.

Ответлă редактăр заместителĕ. И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

ССР Союзĕн Государствă Страхованийĕ

ĔÇÇЫННИСЕН ПУРНĂÇНЕ ИРĔКЛĔ СТРАХЛАССИНЕ ТУСА ПЫРАТ

Пурнăçа коллективлăн страхлани

пĕр-пĕр инкекрен инвалид пулса йулсан тата кĕтмен çĕртен сарăмсăр вилсе кайсан государствăран укçа илме кашни ĕççынни хăйĕн пурнăçне 500 тенкĕрен пуçласа 5000 тенкĕлĕх таран страхлама пултарат.

Пĕтĕм коллективри çынсенчен 50 процентран кайа мар страхланаççĕ пулсан çеç, коллективлăн страхлама йышăнаççĕ.

Страховкă укçине кашни 1000 тенкĕлĕх страхланăшăн çулталăка 12 тенкĕ пулат.

Пурнăçа уйрăмăн страхласси

1000 тенкĕ тата унтан малала кирек мĕн чухлĕ таран та пурнăçа уйрăмăн страхлама пулат.

Вилсен тата страхланă срукчен пурăнсан государствăран укçа илме страхлани

Кунашкал страхланă тăрăх Государствă страхованийĕ страхланнă çын йаланлăха инвалид пулса йулсан, йе страхланă срук тухиччен пурăнсан страховкă укçине парат. Страхланнă çын вилсен, страховкă укçине страхланнă çын кама пама хушнă (завешчани тăрăх) çавна параççĕ. Кунашкал йĕркепе 16 çултан пуçласа 60 çулхисем таран страхлаççĕ.

Страховкă укçи кашни 1000 тенкĕлĕх страхланăшăн çулталăка—44 тенкĕ тата ытларах та тӳлемеле пулат. Кунта страхланакан миçе çулхине тата мĕн чухлĕ срукăха страхланине шута илсе хак хураççĕ.

Кирек мĕнле сăлтавпа вилсен

Государствăран укçа илме страхланма кашни 1000 тенкĕлĕх страхланăшăн çулталăка (страхланакан çын миçе çулхине шута илсе)—15 тенкĕрен пуçласа 39 тенкĕ таран страховкă укçи тӳлемеле пулат.

Инкек пулнипе вилсен йе инвалида йулсан

Государствăран укçа илме страхланма çын мĕнле ĕçре ĕçленине кура кашни 1000 тенкĕлĕх страхланăшăн çулталăка 2 тенкĕ те 50 пусран пуçласа 15 тенкĕ таран страховкă укçи тӳлемеле пулат.

Тĕрлĕрен справкăсене ССР Союзĕн пур хулисенче тата районĕсенче хуласенчи тата районсенчи финанс пайĕсем çумĕнчи страховой инспекцисенче ыйтса пĕлме пулат.

Пурнăçа страхлас тĕлĕшпе тумали ĕçсене йĕркелеме чĕннĕ тăрăх инспекцисем хăйсен агенчĕсене учрежденисене тата киле йараççĕ.

2—2

Стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхне хутшăнса

Йĕпреç районĕнчи машинă-тракторлă станци Сталинла вунăкунлăха хутшăнса Вăрнар районĕнчи машинă-тракторлă станцине ăмăртăва чĕнчĕ. Йĕпреçри МТС хăй çине: „СТЗ" тракторсене февралĕн 1-мĕшĕччен, „ЧТЗ" маркăлă тракторсене йанварĕн 15-мĕшчен, „СТЗ" маркăлă 19 трактора декабĕрĕн 12-мĕшчен ремонтран кăларма, кашни тракториста политикăла вĕренӳве тата техникăла вĕренӳве йавăçтарса, 1938 çулхи çуркуннене 40 тракторис вĕрентсе кăларма, вĕсенчен 10 бригадир, 6 комбайнер хатĕрлĕме обйазателствă илчĕ.

Ку обйазателствăна пурнăçлама ремонтра ĕçлекен рабочисем пĕр-пĕрин хушшинче социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса йачĕç. Хăшпĕр рабочисем хăйсен ĕç нормисене 100—150 процент тултарса пыраççĕ. Н Йаковлев бригадир малта пырат. Унăн бригади, 6 кунта пĕр трактор ремонтран кăлармала пулсан, 4 кунтах йусаса кăларнă. Йаковлев кăçалхи çулахи ĕççенче те малта пынă. Унăн бригадинчи кашни тракторăн 800 гектар сухалама пулнă пулсан, 1250 гектар сухаланă. Бригадăри Романов тракторис кăçал 987 ĕçкунĕ, Хиркин—842 ĕçкунĕ тунă. Йаковлев бригадира районри выставкăра преми пана. Октйабĕр праçникĕнче унăн бригадине куçса çӳрекен хĕрлĕ йалав панă.

Ремонтра тата Крылов, Матвейев бригадисем тăрăшса ĕçлеççĕ. МТС декабĕрĕн 12-мĕшĕ çитнĕ тĕле тракторсене ремонтлассипе 4мĕш кварталăн плайне ытлашшипех пурнăçлассишĕн тăрăшат. 19 трактор йусама йышăннă пулсан, пайанхи куна 7 „СТЗ", 2 „ЧТЗ" тракторсене йусаса кăларнă. Тата 6 трактора çак кунсенчех йусаса кăлараççĕ.

Кадрсене хатĕрлессипе те ĕç хĕрсех пырат. Декабĕрĕн 1-мĕшĕнче тракториссен курсĕ уçалнă. Унта 47 çын вĕренеççĕ. Вĕсенчен 5 хĕрарăм. 10 лайăх тракториса Канаша бригадир-трактористсен курсне йанă.

Г. Марушев.

Лесниксен ăмăртăвĕ

Шупашкар районĕнчи вăрман хуçалăхĕнчи лесниксем, деçатниксем тата служăшчисем суйлав кунне производствăра ӳсĕмсем тунипе уйавлама хатĕрленеççĕ. Хальхи вăхăтра пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ăмăрту договăрĕсенче кăтартнă: государствă пурлăхне сыхлас ĕçре сисĕмлĕ пулас, вăрман ĕрчетес ĕç планĕсене вăхăтра тултарса пырас задачăсене пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

Атăл леш йенчи лесниксем Степанов, Смирнов, деçатниксем Федоров, Савелйев тата обйесчиксем Кузнецовпа Чуваков йулташсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе Атăл леш йенчи дачăри вăрман хатĕрлев планне декабĕрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Ăмăртăва хутшăннă работниксем хăйсен политикăпа техникăла пĕлĕвне ӳстерсех пырассишĕн тăрăшаççĕ.

Икшер нормă тултараççĕ

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр.). Комбинатра декабĕрĕн 2-мĕшĕнчен пуçласа стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхĕ пырат. Малтанхи кунах стахановецсем пысăк çитĕнӳсем турĕç. Акă, стольарнăй цехра торцовальнăй станок çинче ĕçлекен стахановка Вера Каçйанова декабĕрĕн 2 мĕшĕнче нормăна 254 процент, Бутин—237 процент, Лимонов—203 процент тултарчĕç.

Декабĕрĕн 3—4-мĕшĕсенче те вĕсем аван ĕçлерĕç. Каçйанова икĕ кунĕнче те нормăна 250 процент ытла тултарчĕ.

Урапасем тăвакан цехри стахановецсенчен уйрăмăнах Никитина, Дубенцов, Иванова йулташсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем çак сталинла вунăкунлăхра кашни кунах нормăсене 200 шер процент тултарса ĕçлеççĕ. Дубенцов йулташ декабĕрĕн 2-мĕшĕнче—234 процент, Кузьмин—262 процент, Никитина—203 проц. тултарнă.

Хăма çуракан цехра Кульков, Алексейев, Пугин, Кочетков йулташсем те лайăх тĕслĕхсем параççĕ.

„Чăваш Коммунĕ" çыръăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. [illegible]0 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 939. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж 13790. 58—92 см. 1—1 п. л.